чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă
1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă
1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă



СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

87 /26493/ № | Кĕçнерни кун, 2014, çу (май), 15 | Хакĕ ирĕклĕ | WWW.hypar.ru


## Уяв ячĕпе!

**Хисеплĕ ентешĕмсем!**

Сире Пĕтĕм тĕнчери çемье кунĕ ячĕпе саламлатăп!

Çемье – ăс-хакăлпа кăмăл-сипет пуянлăхĕ, наци культурин, пурнăçăн çирĕпленнĕ йăлисен, çĕнĕ ăрусем аслисен ĕçне малалла тăсмалли йĕрке управçи. Юрату тата пĕр-пĕрне хисеплесси çинче никĕсленнĕ çирĕп çемье – обществăри тăнăçлăхпа аталану, Чăваш Енпе Раççейĕн ырă пуласлăхĕн никĕсĕ.

Мĕн пур çемье тата пĕтĕм этемлĕх хаклăхĕсене çирĕплетесси, ачаллă çемьесене пур енлĕн пулăшасси патшалăх политикинче тĕп вырăнта. Ача амăшĕпе ачалăха сыхламалли программăсем, нумай ачаллă çемьесене тĕревлемелли хушма мерăсем йышăннă. Федерацин тата республикăн амăшĕн капиталĕсене, виççĕмĕш ачашăн паракан пособи тӳлетпĕр, нумай ачаллă çемьесене тӳлевсĕр çĕр лаптăкĕсем уйăрса паратпăр, социаллă пулăшăвăн ытти меслечĕпе усă куратпăр.

Пĕлтĕр 3 çултан аслăрах ачасем тĕлĕшпе ача сачĕсенчи черетсене пĕтернĕ, 2015 çулта вара мĕн пур ачан шкулччензи вĕренĕвне тивĕçтерĕпĕр.

Çемьен ачана воспитани парас ĕçри пĕлтерĕшĕ пысăк. Вăл сывă пулни çеç çителĕксĕр, чăн-чăн çын çитĕнтĕр – ку хисепе тивĕç йывăр ĕç. Çавăнпах «Юратупа шанчăклăхшăн» орден туса хунă, унпа мăшăрланса 50 тата ытларах çул пĕрле пурăнакан, çирĕп, сывă, йĕркеллĕ, пĕр-пĕрне юратнипе хисеплени çинче никĕсленнĕ, ачисене – Раççей Федерацийĕн лайăх гражданĕсене – çитĕнтернĕ çемье йĕркеленĕ мăшăрсене наградăлатпăр.

Паян эпир тĕрĕс çул суйласа илнĕ тесе çирĕппĕнех калама пулать. Иккĕмĕш çул ĕнтĕ республикăра халăх йышĕ хăй тĕллĕн ӳссе пынине палăртатпăр, çемьесенче вăрах кĕтнĕ виççĕмĕш, тăваттăмĕш, пиллĕкмĕш ачасем ытларах çуралаççĕ. Иртнĕ çулталăкра çеç Чăваш Енре нумай ачаллă çемьесен шучĕ 10% хушăннă.

Хаклă туссем, пирĕн кăтартусем лайăх, анчах ăнтăлмалăх тĕллевĕмĕрсем пур. Пурне те сывлăх, телей тата ăнăçу сунатăп. Кашни çĕнĕ кун сире илĕртӳллĕ самантсем парнелетĕр, савăнăç, çĕкленӳллĕ кăмăл-туйăм, çитĕнӳ кӳтĕр!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**


***Раççей почтин мĕн пур уйрăмĕнче «Хыпара» 744 тенкĕ те 12 пуспа, «Хыпар-шăмат куна» 321 тенкĕ те 96 пуспа çырăнтараççĕ.***



**СДАЕМ В АРЕНДУ**

АУ "Издательский дом "Хыпар" предоставляет в аренду помещения на 6 и 7 этажах здания редакционно-издательского корпуса, расположенного по адресу: Чувашская Республика, г.Чебоксары, пр. И.Яковлева, д. 13, для использования под офис.

По всем вопросам обращаться в 616 каб. или звонить по тел. 8-967-478-06-12, 56-00-67.


*Правительствăра*

# Рейтинг влаç ĕçне хаклать

***Раççей Правительстви тунти кун виçĕ çуллăх тапхăрти кăтартусене тĕпе хурса федераци субъекчĕсен влаç органĕсен ĕç-хĕлĕн тухăçлăхне пĕтĕмлетекен рейтинга палăртни çинчен эпир пĕлтернĕччĕ. Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ЧР Министрсен Кабинечĕн ĕнерхи ларăвне шăпах çак рейтинга тишкернинчен пуçларĕ.***



Михаил Васильевич палăртнă тăрăх – «халăх патне тĕрлĕ информаци илсе çитереççĕ», çавăнпа та чăннипе паллаштарни вырăнлă. Асăннă рейтинга 2008 çултанпа хатĕрлеççĕ. Малтан ăна 300 ытла кăтарту çинче никĕслетчĕç, кайран вĕсен шутне чакарчĕç, халĕ тĕп тата анлă 12 кăтартăва тĕпе хураççĕ. Тата – регионсем хăйсем сĕнекен икĕ кăтарту. Вĕсен 50% экономикăпа çыхăннă, 30-шĕ – социаллă сферăпа, 20% – халăх хушшинче ирттерекен ыйтăм пĕтĕмлетĕвĕсем.

– 11 кăтартăва эпир туллин пурнăçланă, – терĕ М.Игнатьев. – Виççĕшĕнпе ĕçлесе çитереймен. Çав шутра – тĕп капитала хывакан инвестицисем. Ку çитменлĕх экономикăн пĕтĕмĕшле аталанăвне те ура хума пултарать. Çынсен тупăшĕ тĕлĕшпе палăртнине пурнăçлайман. Ӳсĕм пур, çапах татах пысăклатмалла. Пурнăçлайман тепĕр кăтарту – патшалăхăн пĕрлехи экзаменне тытайман çамрăксен тӳпи пысăкки. Çакăнта каçхи шкулсенче вĕренекенсен экзаменĕсене те шута илнин витĕмĕ куç кĕрет.

2012 çулхипе танлаштарсан пĕлтĕр Чăваш Ен рейтингра хăйĕн позицине самай лайăхлатнă – 20-мĕш вырăна çĕкленнĕ. Каялла чакнă субъектсем йышлине кура пăхсан республика малалла ăнтăлни, паллах, аван. Ӳсĕмлĕ кăтартусен шутĕнче Михаил Васильевич пĕчĕк бизнес продукцийĕн çаврăнăшĕ ӳснине палăртрĕ. Бюджета хывакан налуксен калăпăшĕ пысăкланни те лайăх. Çурт-йĕр ытларах хута янă, ĕççĕрлĕхе чакарнă. Халăх хушшинче ирттернĕ ыйтăмсем те çынсем влаç органĕсене шанасси ӳснине çирĕплетеççĕ.

Çынсен пурнăç тăршшĕпе /вăтамран 74,3 çул/ çыхăннă кăтартупа республика малтисен шутне кĕме пултарнă. Тăлăхсен, ашшĕ-амăшĕн ăшшисĕр юлнисен шучĕ те чакнă. «Ачасене усрава илекенсене хавхалантармалли хушма мерăсемпе усă курни ача çурчĕсене хупма май парать», – терĕ кун пирки ЧР Пуçлăхĕ.

Патшалăх парăмне те чакарнă: «Мускав çакна çирĕп сăнаса тăрĕ. Чи малтанах инвестицисемпе çыхăнман тăкаксем ӳснине сивлессе кĕтмелле. Тăкаксене чакарнăшăн хăшĕсем кăмăлсăр, йăнăшаççĕ, анчах урăхла май çук – расхутсене малашне те пĕчĕклетме тăрăшăпăр». Çак кунсенче Раççей Правительстви регионсене пулăшма хушма укçа уйăрмашкăн йышăннă. ЖКХна реформăлама пулăшакан фондран Чăваш Ен те тата 462 млн тенкĕ илет, пĕтĕмпе 2 млрд та 15 млн тенкĕ пулать. «Юхăннă çуртсенче пурăнакансем хăтлă хваттерсем кĕтеççĕ. Пурне те çĕнĕ хваттерсем парăпăр теместĕп, анчах çынсене йĕркеллĕ çурт-йĕрпе тивĕçтермеллех», – терĕ Михаил Васильевич. Кăçалхи ĕçе хакланă май вăл çапла пĕтĕмлетрĕ: «4 уйăх хыçа юлчĕ. Пĕтĕмĕшле ĕç-хĕл туртăмĕ пĕлтĕрхинчен лайăхрах. Çав шутра – тупăшсен ӳсĕмĕ те».

Ларăвăн кун йĕркинчи ыйтусене тишкерме пуçланă май чи малтанах вице-премьер – сывлăх сыхлавĕн министрĕ Алла Самойлова сăмах илчĕ. Вăл вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене патшалăхăн уйрăм полномочийĕсене парасси çинчен калакан саккуна кĕртме сĕнекен улшăнусемпе паллаштарчĕ. Çĕнĕлĕхсем тĕпрен илсен ĕç сыхлавĕпе çыхăннă, ку полномочисен пĕр пайĕ вырăнти хăй тытăмлăх компетенцине куçать.

Вице-премьер-финанс министрĕ Светлана Енилина та саккуна кĕртмелли çĕнĕлĕхсем çинчен каласа пачĕ. Вĕсем налуксемпе çыхăннă. Ку ыйту патне çитес номерсенчен пĕринче таврăнăпăр-ха, хальлĕхе вара çакна каласа хăварни вырăнлă: транспорт налукĕ ӳсет. Автомобильсен хăватне кура – тĕрлĕ виçепе.

Транспорт ыйтăвне хускатнă май М.Игнатьев кивĕ автомобильсене утилизацилессипе çыхăннă темăна çĕклерĕ: «Ку енĕпе чылай ĕçленĕччĕ. Халĕ лару-тăру мĕнлерех? Калăпăр, çын автомобильне сутса янă, анчах налук уведомленийĕ пур пĕр ун патне килет – çакнашкалли çук-и?» ФНС управленийĕн ертӳçин тивĕçĕсене пурнăçлакан Ольга Никина пĕлтернĕ тăрăх – кивĕ, юрăхсăр автомобильсен тĕп пайне утилизациленĕ. Юлнисем – шутлă кăна. Транспорт налукĕн ӳсĕмне илес тĕк – çакă автомобильсен хуçисен тăкакĕсене нумай пысăклатмалла мар. Темăна вĕçленĕ май Михаил Васильевич транспорт налукĕ пĕтĕмпех çулсем тума, юсама кайнине аса илтерчĕ, эппин, çак тăкаксем – автомобилистсемшĕнех.

С.Енилина кăçалхи пĕрремĕш кварталта республика бюджетне мĕнле пурнăçлани çинчен каласа пачĕ. Тупăш та, тăкаксем те – ӳсĕмлĕ. Бюджетăн социаллă тĕллевлĕхĕ упранса юлнă. Апла пулин те экономика, ял хуçалăх, çул-йĕр хуçалăхĕн аталанăвĕ валли янă тăкаксем те пысăкланнă. Бюджета налуксем ытларах кĕнине палăртнипе пĕрлех Светлана Александровна акцизсен калăпăшĕ чакнине те пытармарĕ.


• 2 стр. ➡


## КУН хыççăн КУН

☎ 56-04-26

### Грециирен – çĕнтерӳпе

***Çу уйăхĕн 4-11-мĕшĕсенче Грецире Пĕтĕм тĕнчери ачасен "Танец маленьких утят" фестивалĕ иртнĕ. Ăна РФ Вĕрентӳ, Культура министерствисен, Раççейри "Содействие детскому отдыху" лагерьсен ассоциацийĕн, Пĕтĕм тĕнчери лагерьсен пĕрлĕхĕн пулăшăвĕпе йĕркеленĕ. Унта Раççейри, Грецири тата 20 çĕр-шыври пултаруллă ачасем хутшăннă.***



Асăннă фестивале Чăваш Енрен Татьяна Новикова кайма тивĕçнĕ. Хĕр ача Йĕпреçри ачасен искусство шкулĕнче тата Кĕлĕмкассинчи пĕлӳ çуртĕнче вĕренет. Грецире вăл I степень диплома тивĕçнĕ. "Татьяна – чылай конкурс çĕнтерӳçи. Фестиваль программипе килĕшӳллĕн вăл "Тĕнчери халăхсен юррисемпе ташшисем" концерт программине те, тĕрлĕ тĕл пулупа ăсталăх сехечĕсене те хутшăнчĕ", – пĕлтернĕ Новикован пултарулăх ертӳçи, Йĕпреçри ачасен искусство шкулĕн директорĕн çумĕ Наталья Рекунова. Талантлă хĕр ача маларах Пĕтĕм тĕнчери ачасен пултарулăхĕпе искусствин "Чунга-чанга" фестивалĕнче I степень диплом тата "Золотой микрофон" кубок илнĕ.

**А.ГРОМОВА.**

### Фагилĕн ырă ĕçĕсем

***Комсомольски районĕнчи Кайнлăк ял тăрăхĕнче Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче пуç хунă паттăрсене асăнса 5 палăк лартнă.***

Кайнлăкри палăка Фагиль Шарафутдинов пуçарăвĕпе тĕпрен юсанă. Ун йĕри-тавра тытнă йывăç картана тимĕррипе улăштарнă. Çак ĕççене тума ăна ял çыннисем – Шамиль Бахтияров, Фидаил Купиров, Радиф Шарафутдинов, Минильфат Галиуллин, Минсагит Сулейманов, Федаил Шарафутдинов пулăшнă. Ял халăхĕ вĕсене чĕререн тав тăвать.

Ку çеç-и? Фагиль Фазылзянович ял çыннисемшĕн тăрăшса хăйĕн ашшĕ чавтарнă кӳлле (Фазыл кӳлли теççĕ ăна) тасаттарса илемлĕ кану вырăнĕ тунă. Çавăн пекех ялти мечете ăшă пăрăхсем вырнаçтарса, чӳречисене ылмаштарса ватăсене савăнтарнă.

**Р.ИВАНОВА.**

### Пĕчĕк пикесем – Кама мерченĕсем

***Тутарстанри Елабуга хули çĕр-шыв гимнасчĕсене Пĕтĕм Раççейри "Кама мерченĕсем" турнира пухнă. Ăмăртура 6-16 çулсенчи чипер пикесем хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарнă.***

Кӳршĕ республикăра Чăваш Ен чысне 11 спортсмен хӳтĕленĕ, вĕсенчен 6-шĕ тăван тăрăха медальсемпе таврăннă. Чи пысăк наградăна Мария Силина çамрăк гимнастка çĕнсе илнĕ. Софья Кудряшова, Дарья Антонова, Софья Баранова, Диана Джумабаева тата Владлена Тимофеева тĕрлĕ ушкăнра тупăшса призерсен йышне кĕнĕ. Ăмăртуран çĕкленӳллĕ кăмăл-туйăмпа килнĕскерсен канма та вăхăт çукрах: халĕ вĕсем çывăх кунсенче иртекен республика чемпионатне хатĕрленеççĕ.

**А.МИХЕЕВ.**


• 3 стр. ➡ «СПОРТ» кăларăм.






# ÇИРĔП ÇЕМЬЕ – ПАТШАЛĂХ МĂНАÇЛĂХĔ

**ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ**

**Хĕвел пайăрки çĕнĕ кун пуçланнине систерсе чӳречерен пӳртелле кĕрет. Ыйхăран вăраннăскер ачамсем çывăракан пӳлĕме шăппăн иртетĕп. Сирĕлнĕ утиялĕсене майлаштарса вителĕп те пĕр авăк пепкемсем мĕнлерех мăшлатса тĕлĕрнине сăнатăп. Пĕр тикĕс сывланипе лăпланса черетлĕ ире хавхаланупа кĕтсе илетĕп. Тĕнчери нумай-нумай амăшĕшĕн кун шăпах çапла пуçланни пирки пĕртте иккĕленместĕп. Çемьери тăнăçлăх – пурнăç çулĕпе çирĕппĕн утма паракан тĕп хавха.**

**Журналист калемĕ лирикăна сулăнни аванах мар пулĕ те – паянхи темăна унсăрăн уçайăн-и? Çу уйăхĕн 15-мĕшĕ – Пĕтĕм тĕнчери çемье кунĕ. Эппин, калас сăмахăм хальхинче çемьен çын пурнăçĕнчи вырăнĕ-пĕлтерĕшĕ тавра пулĕ. Атте-анне, асатте-асанне, кукамай-кукаçи, пичче-шăллăм, аппа-йăмăк, мăшăр, ача-пăча, мăнук… – мĕн тери пуян чăваш чĕлхинчи çемье лексики! Çакă пирĕн тăхăмсем этем кунçулĕнче çемьене чăннипех сумлă вырăна хунине палăртмасть-и?**

**Раççей, тĕнчери кирек хăш çĕршыв пекех, хăйĕн историйĕнче тĕрлĕ саманана тӳсет. Акă пирĕн ăру социализм тапхăрĕнче кун çути курчĕ те паян пач урăх йӳтĕмпе аталанакан вăхăта кĕрсе ӳкрĕ /демократипе капитализм евĕрлевĕ темелле-ши ăна?/. Кашни саманан – хăйĕн ырă-япăх енĕсем. Çемье хаклăхĕсем çинчен калаçас чухне те тĕрлĕ ӳкерчĕке куç умне кăларма тивĕ. Пĕр-икĕ-виçĕ уйăхри пепкине кампа май пур çавăнпа хăварса амăшĕ ĕçе васкани, продразверстка ыйтнине пурнăçласа килйыш хăй мĕнпе тăранасса шухăшламасăр пурлăхне патшалăх валли ăсатни, ачи Мăн кунра çăмарта пуçтарма хутшăннăшăн ашшĕне е амăшне парти ретĕнчен кăларни, çав вăхăтрах çамрăк мăшăра колхоз-совхоз шучĕпе çурт янтăласа пани, туй валли ылтăн çĕрĕ туянма патшалăх укçа-тенкĕ уйăрни… – нимĕн те манăçман халăхра.**

**Çемье обществăн пĕр пĕчĕк пайĕ тенине шкул сакки çине ларсанах илтме тытăннă. Апла пулин те ачалăхра чылайăшĕ унăн чăн пĕлтерĕшне чухласах çитереймен-тĕр. Çитĕнсе "йăва" çавăрнă хыççăн – пурăнма хавхалантаракан чи пысăк хăват чăннипех унра пулнине туйсан – тин пуçа шăнăçать вăл. Калас шухăшăма яр уçма Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев сăмахĕсем вырăнлă: "Ача мĕнле çын пулса çитĕнессине пуринчен ытла çемье витĕм кӳрет. Çемье – вăй-халпа хавхалану çăл куçĕ, яланах юратупа ăшăтакан, çитĕнӳсемпе савăнтаракан, малашлăха шанăç парнелекен вырăн". Политика лидерĕ-и, паллă бизнесмен-и, чаплă артист-и – çемьери çураçусăр вĕсен карьери ниме те тăмĕ. Çывăх çынсен юратăвĕ пек урăх нимĕн те чикĕсĕр хавхалану кӳреймĕ.**

**Телее, пирĕн патшалăх çемье хаклăхĕсене тивĕçлĕ шая лартать теме май пур. Унсăрăн вĕсене хӳтĕлесе тĕрлĕ саккун вăя кĕрĕччĕ-и? Çемье /амăшĕн/ капиталĕпе, пурăнмалли çурт-йĕр çаврăнă чухне паракан çăмăллăхсемпе, виçĕ е ытларах ачашăн уйăракан çĕр лаптăкĕпе, пилĕк е унран та ытларах çул çитмен ачаллисене пурăнмалли çуртпа тивĕçтернипе мухтанма пулатех. Паллах, лайăххин чикки çук – ку та сахал пек туйăнать. Патшалăхран ырă улшăну пĕрмаях кĕтетпĕр-ха, хамăр вара…**

**Çемье чăннипех савăнăç çăл куçĕ пултăр тесен унăн тулли пулмалла: çитĕнекен ачана ашшĕ те, амăшĕ те кирлĕ. Пирĕн чăваш хĕрарăмĕсен упăшкисем вара çурри тенĕ пек çемьерен аякра кун кунлаççĕ. Çук, вĕсене "шапашра"çӳренĕшĕн ӳпкелешместĕп, тĕпренчĕкĕсем ашшĕ тĕревĕсĕр ӳснĕшĕн пăшăрханатăп çеç. Шкулта вĕренекен ывăлне физикăн е химин ăнланма йывăр вăрттăнлăхĕсене кайран – май пур чухне – ăнлантарма манмĕç-и, кĕçĕн класра ăс пухакан шăпăрланпа вăрăм çулран таврăнсан шашкăлла выляма вăхăт тупĕç-и вĕсем?.. Ĕçлесе илнĕ укçа кĕсйинче самай мăкăрланса тăнă чухне "çуттине" те ытларах ас тивмĕç-и? Тепĕр тесен хуçалăхри кулленхи ĕçпе хăшкălнă мăшăрĕсене тимлĕхсĕр хăвармĕç-и?**

**Чăнлăха пытараймăн: вырăнта тивĕçлĕ шалу илейменрен паян ашшĕпе амăшĕ иккĕшĕ те аякра ĕçлени, вĕсен ачисем вара опекунсен аллинче çитĕнни – хăнăхнă пулăм. Ан тив: опекун вырăнĕнче тăван кукамăшĕ е асламăшĕ пултăр – тĕнчепе, пурнăçпа паллашса çеç пыраканскере çемье пуçĕсен вĕрентсе-кăтартса пымалла, чун ăшшине куллен парнелемеллеçке.**

**Кунашкал кăткăслăхпа шăла çыртса çырлахсан та çивĕч тепĕр ыйтупа ниепле çураçма май çук: республикăра ашшĕ-амăшĕн хӳтлĕхĕсĕр юлнă социаллă тăлăх йышлă. Тĕрлĕ сăлтава пула çывăх çыннисенчен уйăрма тивнĕ ачасене патшалăх учрежденийĕсенче пур енлĕн аталантарса ӳстерме кăткăс. Аталаннă хăш-пĕр çĕршыв /Израиль, Швеци…/ ырă опычĕ пирĕн тăрăхра та йăл илет: ача çурчĕсене Раççейре те майĕпен пушатма тытăнчĕç. Тăван ашшĕ-амĕшĕн хӳтлĕхĕсĕр тăрса юлнисене çемьесене вырнаçтарас юхăм Чăваш Енре те вăй илчĕ. Çапла асăннă категори çул çитмен ачасене усрамалли пĕр учрежденире тăлăхсем юлмарĕç /сăмахăм – Канашри интернат хупăнни çинчен/. Ют пепкесене хăйсен çунатти айне илнĕ çемьесем вĕсене хăйсен тĕпренчĕкĕсем пекех йышăнса çителĕклĕ тимлĕх уйăрччăр çеç – "тăлăхсенчен" обществăн çирĕпленнĕ йĕркисене, саккуна пăхăнса пурăнакан ывăл-хĕрсемех çитĕнĕç. Сутă кун парнеленĕ ашшĕн е амăшĕн чурăслăхĕ кăна вĕсене юнпа ан куçтăрччĕ.**

■ **Ирина ПУШКИНА**


## «Хыпар», «Çамрăксен хаçачĕ»: электрон çырăнтару



2014 çулăн II çурри валли *«Хыпара», «Çамрăксен хаçатне»* электрон мелпе çырăнса илме пулать.



*Çур çуллăх хак:*
**«Хыпар» – 90 тенкĕ, «Çамрăксен хаçачĕ» – 50 тенкĕ.**

Тĕплĕнрех – www.hypar.ru сайтра


## Çанталăк çинчен

Паян пĕлĕтлĕ çанталăк пулать, çумăр çукалать. Çил кăнтăр-хĕвел тухăçĕнчен çеккунтра 1 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 19, çĕрле 12 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 757 мм, сывлăшри нӳрĕк 68 процент.

**Кун тăршшĕ 16 сехет те 20 минут.**

Ыран уяр çанталăк пулать. Çил çурçĕртен çеккунтра 4 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 21, çĕрле 9 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 758 мм, сывлăшри нӳрĕк 45 процент.

**Кун тăршшĕ 16 сехет те 24 минут.**

# Рейтинг влаç ĕçне хаклать

**/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.**

Калаçтарнă темăсен шутĕнче топливăпа энергетика комплексне тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха çитес кĕркуннехи-хĕллехи тапхăра хатĕрлессине асăнмалла-тăр. Вице-премьер – строительство министрĕ Олег Марков ку енĕпе пурнăçламалли анлă ĕçсемпе паллаштарчĕ – котельнăйсене юсассинчен пуçласа çĕр кăмрăкĕпе мазут хатĕрлесси таранах. Ĕçсене вăхăтра, авăн уйăхĕн 15-мĕшĕ тĕлне, вĕçлес тĕлĕшпе иккĕленнĕн туйăнмарĕ. Калаçăва çивĕчлетекенни Правительство пуçлăхĕ Иван Моторин пулчĕ – вăл парăмсемпе кăсăкланчĕ. О.Марков пĕлтернĕ тăрăх – парăмсен пĕтĕмĕшле калăпăшĕ чăннипех пысăк, 3,6 млрд тенке яхăн. Çав шутра газшăн – 598 млн, энергоресурссемшĕн – 319 млн, ăшă энергийĕшĕн – 2,4 млрд тенкĕ. «Коммуналлă технологисем» ООО, Çĕмĕрлери «Теплоэнерго» МУП, ытти хăш-пĕр предприяти пысăк парăмсем пухнă.

– Парăмсем питĕ пысăк, çитменнине вĕсем татах ӳссе пыраççĕ, – кăмăлсăрланчĕ Чăваш Ен Пуçлăхĕ. – «Коммуналлă технологисем», ытти потребитель... Çивĕчлĕхе «алă вĕççĕн ĕçлесе» сирме тăрăшатпăр – çав-çавах вĕçĕ-хĕрри курăнмасть. Пирĕн потребительсене парăмсене тӳлеме вĕрентмелле. Лавккана кайсан тавара укçасăр илместпĕр-çке, ЖКХра та çаплах пулмалла. Çĕмĕрленех илер: каллех парăмсене 100 млн тенкĕлĕх ӳстернĕ. Республика бюджетĕнчен текех пĕр миллион тенкĕ те памастпăр!

2014 çулта районсене ялсенче комплекслă майпа çурт-йĕр тума паракан субсидисене валеçесси çинчен вице-премьер – ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов каласа пачĕ. Маларах çак программăпа килĕшӳллĕн республикăра тăвата проекта пурнăçланă. Кăçал республика бюджетĕнчен 40 млн тенкĕ уйăраççĕ, федераци бюджетĕнчен – 41,6 млн. Патăрьел районĕнчи Шăнкăртамра 152 çурт тума палăртнă – пĕтĕмпе 222 млн тенкĕ кирлĕ пулать. Шупашкар районĕнчи Çĕньял ял тăрăхĕнче – 69 çурт. Михаил Васильевич çуртлă пулакансен списокĕсене тĕплĕ тĕрĕслеме сĕнчĕ – «айккинчи çынсем çук-и?» Сергей Владимирович ку ыйтăва куçран вĕçертменни çинчен каларĕ. Шăнкăртамра, чăнах та, списокра предпринимательсем ытларах-мĕн, анчах Шупашкар районĕнче – пурте тенĕ пекех вырăнти хуçалăхсенче ĕçлекенсем. Те Шăнкăртамăн çаврăнăçуллă çыннисем патшалăх шучĕпе çурт-йĕрлĕ пулма ăнтăлни сисчĕвлентерчĕ – Михаил Васильевич тепĕр хут асăрхаттарчĕ: «Пуян çынсемех патшалăх укçипе усă кураççĕ – çакнашкалли те пулать. Укçа паратпăр, анчах вырăнти ял хуçалăхĕнче ĕçлекенсем çук – апла пулмалла мар».

Лару Министрсен Кабинечĕн маларах тунă хăш-пĕр йышăнăвне улшăнусем кĕртнипе вĕçленчĕ.

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

*Ял хуçалăхĕ*

# Хăвăртлăха чакарас марччĕ



Г.ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕ

Республикипе талăкра вăтамран 12 пин ытла гектар тырă акнă, уйрăм кунсенче 17 пинрен те иртнĕ. Юлашки вăхăтра хăвăртлăх чакни сисĕнет. Çакă, ахăртнех, техникăн пĕр пайĕ çĕр улми пуссине куçнипе çыхăннă ĕнтĕ. Унсăр пуçне чылай хуçалăх пахча çимĕç, сахăр кăшманĕ, горчица, ытти культура та çитĕнтерме тĕллев тытнă.

Çуртрисем шăтса тухнă лаптăксенче çум курăк тата хурткăпшанкă самантлăха та тĕлĕрмеççĕ. Çичĕ районта çум курăка пĕтерме гербицит сапаççĕ. Сăтăрçăсемпе хальлĕхе Шупашкар районĕнчи уй-хир ĕçченĕсем çеç кĕрешеççĕ. Çамрăк калчана сыхласа хăварас ĕçе ыттисем те тăхтаса тăмасăр хутшăнасса шанас килет.

■ **Валентин ГРИГОРЬЕВ**

ЧР Ял хуçалăх министерствинчен пĕлтернĕ тăрăх – çу уйăхĕн 13-мĕшĕ тĕлне республикăри вун пĕр районта пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши культурăсене акса пĕтернĕ. Кăтартусем кунсерен мар, сехетсерен улшăнаççĕ. Çавăнпа та паянхи кун тĕлне тата темиçе район палăртнă тĕллеве пурнăçласси никама та иккĕлентермест.

Кăçал çуркунне иртерех килнĕшĕн савăнмалла çеç. Ака вăхăчĕ пĕлтĕрхинчен самаях малта пырать. 2013 çулта çак тапхăр тĕлне çурхи культурăсене 74% акнăччĕ, кăçал – 95,9%, çĕр улми – 17,6%, халĕ – 40,9%. Выльăх апачĕлĕх куккуруспа та кăтарту аван: республикипе – 1110 гектар, пĕлтĕрхи çак тапхăрта – 480. Шел те, майракаллă шултра выльăх рационне пуянлатакан культурăна хальлĕхе 8 район çеç туса илесси паллă.

2013 çулхи çак вăхăтра

**Районсенче уй-хир ĕçĕ епле пынине кăтартни /ЧР Ял хуçалăх министерствинчен пĕлтернĕ тăрăх, çу уйăхĕн 13-мĕшĕ тĕлне/**

| | Пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши культурăсем | | | Çĕр улми | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| | акмалла /планпа/ | акнă | | лартмалла /планпа/ | лартнă | |
| | га | га | % | га | га | % |
| Пăрачкав | 11202 | 11235 | 100,3 | 3 | 3 | 100 |
| Канаш | 11101 | 11107 | 100,1 | 459 | 130 | 28,3 |
| Элĕк | 8164 | 8169 | 100,1 | 924 | 433 | 46,9 |
| Йĕпреç | 5592 | 5595 | 100,1 | 81 | 27 | 33,3 |
| Çĕмĕрле | 1550 | 1551 | 100,1 | - | - | - |
| Елчĕк | 15330 | 15330 | 100 | 1036 | 550 | 53,1 |
| Патăрьел | 13596 | 13596 | 100 | 2340 | 1411 | 60,3 |
| Комсомольски | 11035 | 11035 | 100 | 1845 | 671 | 36,4 |
| Етĕрне | 8989 | 8989 | 100 | 617 | 74 | 12 |
| Шăмăршă | 8836 | 8836 | 100 | 198 | 90 | 45,5 |
| Красноармейски | 8795 | 8795 | 100 | 510 | 179 | 35,1 |
| Çĕрпӳ | 15213 | 15075 | 99,1 | 230 | 69 | 30 |
| Вăрмар | 13792 | 13650 | 99 | 793 | 450 | 56,7 |
| Тăвай | 10473 | 10300 | 98,3 | 351 | 40 | 11,4 |
| Куславкка | 7949 | 7800 | 98,1 | 973 | 554 | 56,9 |
| Вăрнар | 13089 | 12507 | 95,6 | 1165 | 360 | 30,9 |
| Муркаш | 11189 | 10629 | 95 | 573 | 60 | 10,5 |
| Сĕнтĕрвăрри | 4955 | 4520 | 91,2 | 605 | 74 | 12,2 |
| Хĕрлĕ Чутай | 3406 | 3101 | 91 | 17 | 6 | 32,9 |
| Шупашкар | 9113 | 7691 | 84,4 | 100 | 35 | 35 |
| Улатăр | 15134 | 10362 | 68,5 | 75 | 57 | 76 |
| **Республикипе** | **208503** | **199873** | **95,9** | **12895** | **5273** | **40,9** |

*Чăвашстат хыпарлать*

# Умра – черетлĕ сăнав

***Раççей Федерацийĕн Правительствин 2010 çулхи чӳк уйăхĕн 27-мĕшĕнчи «Раççей Федерацийĕнче федерацин социаллă-демографи ыйтăвĕсемпе статистика сăнавĕсен тытăмне тата халăх вилнипе, чирленипе тата инвалида тухнипе экономика тӳсекен çухатусен мониторингĕ йĕркелесси çинчен» 946-мĕш йышăнăвне пурнăçласа кăçалхи ака уйăхĕнче çынсем талăкри вăхăт фончĕпе усă курнин суйласа илнĕ сăнавне йĕркелеççĕ.***

Раççейре пĕтĕмпе 10 пин кил хуçалăхĕнчен ыйтса пĕлĕç, Чăваш Енре – 98-тан: хулара – 56-ран, ялта – 42-рен. Росстат сăнав ирттерме Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар, Улатăр, Канаш, Çĕмĕрле, Çĕрпӳ хулисене, Шупашкар районĕнчи Тутаркасси поселокне, Вăрнар районĕнчи Мăн Явăш, Канаш районĕнчи Анаткас ялĕсене кĕртнĕ.

Респондентсенчен виçĕ формăпа ыйтса пĕлеççĕ: çемье, харпăр хăй /15 çултисем тата унран аслăраххисем валли/ анкетисемпе тата ятарлă «Вăхăтпа усă курнин дневникĕ» бланкпа.

Тĕпчев кăтартăвĕ пирĕн граждансем ĕçре, вĕренӳре, килти тивĕççене пурнăçламашкăн, ачапăча пăхмашкăн тата вĕсене воспитани памашкăн, канмашкăн мĕн чухлĕ вăхăт пĕтернине уçăмлатĕ.

Ыйтăмра пухнă информаци конфиденциаллă шутланать, унпа статистикăн пĕтĕмĕшле кăтартăвĕсене хатĕрлемешкĕн кăна усă курĕç.

Малашне çакнашкал сăнавсене 5 çулта пĕр хут йĕркелĕç.

■ **В.ИЛЬИНА**

# Налук – 11,8 млрд тенкĕ ытла

***Федерацин налук службин республикăри управленийĕнчен пĕлтернĕ тăрăх – кăçалхи кăрлач-ака уйăхĕсенче Чăваш Енре мĕн пур шайри бюджетсене налук органĕсем администрацилекен тӳлевсене 11,8 млрд тенкĕ ытла пухнă. Пĕлтĕрхи çак тапхăртипе танлаштарсан – 104,3 %.***

Çав шутра хушма хакран илекен налук тӳпи – 30,4, уйрăм çынсен тупăшĕнчен – 26,6, усламран – 18,6%. Çавăн пекех пурлăхран илекен налук (10,6%), акцизсен (4,9%) тӳпи те курăмлă.

Федераци бюджетне 4 млрд тенке яхăн пухнă – ӳсĕм 106%. Территори бюджетне 7,9 млрд тенке яхăн хывнă, çак виçе те иртнĕ çулхи кăрлач-ака уйăхĕсенчи кăтартуран 3,4% пысăкрах. Çав шутра республика бюджетне кĕнĕ укçа 6,2 млрд тенкĕпе танлашнă, вырăнсенчи бюджетсен тӳпи – 1,7 млрд тенкĕ.

**К.НИКОЛАЕВ.**

# Чи лайăх учреждени

***Кăçал тăрăхĕнче чи лайăх культурăпа кану учрежденисене палăртнă. «Ăнăçу – 2014» конкурса 12 клубпа культура çурчĕ хутшăннă.***

Комисси членĕсем учреждениесен ĕçĕ-хĕлне тишкернĕ, пӳлĕмсемпе залсен илемлĕхне тата территорири тирпейлĕхе пахаланă. Экспертсем çавăн пекех клубсем ĕçре çĕнĕлĕхсемпе усă курни, наци пуянлăхне упрас енĕпе мĕн-мĕн туни, ĕçлекенсен ăсталăхне тата ытти енне хакланă. Конкурс пĕтĕмлетĕвĕпе çĕнтерӳçĕ ятне Кайнлăк ял тăрăхĕнчи Хирти Мăнтăрти культурăпа информаци центрĕ тивĕçнĕ. Çак учреждениех çу уйăхĕнче Шупашкарта иртекен республика конкурсĕнче район чысне хӳтĕлĕ. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене Урмаелти тата Хырхĕрринчи культура çурчĕсем йышăннă. Комисси членĕсем Йӳç Шăхаль, Аслă Чурачăк тата Çĕнĕ Мăрат культурăпа информаци центрĕсен ĕçĕсене те пысăк хак панă, вĕсене уйрăм парнесемпе чысланă.

**А.ПЕТРОВ.**

# Раççей ял хуçалăх банкĕнче счет тӳлевсĕр уçма васкăр

Чăваш Енри пĕчĕк бизнес предприятийĕсен тата уйрăм предпринимательсен Раççей ял хуçалăх банкĕнче «Тест-драйв+»* акципе килĕшӳллĕн счет тӳлевсĕр уçмалли вăхăтăн шутлă кунĕсем кăна юлчĕç.

Асăннă акци 2014 çулхи нарăс уйăхĕн 17-мĕшĕнче пуланнă, кăçалхи çу уйăхĕн 17-мĕшĕччен тăсăлать. Унăн условийĕсем тăрăх Банк клиенчĕсем расчет счетне тӳлевсĕр уçмалли майпа, çавăн пекех банк ыйтăвĕсене дистанци тытăмĕпе тивĕçтермелли мелпе çыхăнтарнă тата кредит панăшăн комисси укçине тӳленĕ чухне 50 процентлă çăмăллăхпа усă курма пултараççĕ. Çапла тумашкăн пĕчĕк бизнес субъекчĕсен ĕçĕ-хĕлĕ асăннă критерисемпе пĕр килмелле: календарлă иртнĕ çулта илнĕ тупăш 400 млн тенкĕрен иртмелле мар тата Раççей ял хуçалăх банкĕнче уçнă расчет счетне хупмалла.

«Хальхи вăхăтра «Тест-драйв+» акцие экономикăн тĕрлĕ отраслĕнчи – пулăшу тытăмĕнчи, суту-илӳри, ял хуçалăхĕнчи, промышленноç производствинчи – юридици сăпатĕнче тăракансем уйрăмах кăмăллаççĕ. Ăна ирттернĕ тапхăрта регионти 200 ытла предприяти Чăваш Республикинчи Банкăн клиенчĕ пулса тăчĕ», – палăртать Раççей ял хуçалăх банкĕн Чăваш филиалĕн директорĕ Ирина Письменская.

Акци условийĕсемпе тĕплĕнрех паллаштаракан информацие Банк сайтĕнче – http://www.rshb.ru/smallbusiness/test_drive_new/ – вырнаçтарнă.

Шупашкарта çак телефонпа ыйтса пĕлме пулать: /8352/ 62-28-77.

*«Раççей ял хуçалăх банкĕ» АУО. РФ ЦБăн 3349№-лĕ генеральнăй лицензийĕ.*

**«Тест-драйв+» акцие вĕçленнĕ юлашки çулталăкра 400 млн тенкĕ таран диапазон чухлĕ виçепе тупăш илнĕ юридици сăпатĕнче тăракансем тата уйрăм предпринимательсем хутшăнма пултараççĕ, РФ субъекчĕсен муниципалитет йĕркеленĕвĕсемсĕр, страховани компанийĕсемсĕр /вĕсен филиалĕсем те çав шутрах/, РФ Пенси фончĕсĕр /унăн территори подразделенийĕсемсĕр/, РФ ФОМС /унăн территори подразделенийĕсемсĕр/, патшалăхăн шутланман пенси фончĕсемсĕр, финансăн ытти организацийĕсĕр /акцие хутшăнакан ял хуçалăх потребительсен кредит кооперативĕсене, потребительсен кредит кооперативĕсене, финанс компани-резиденчĕ маррисене тата инвестици компанийĕсене шута илмесĕр/ пуçне.*

Реклама




# Вăрçă çулĕсенче пиçĕхнисем



***Анастасия Дмитриевна Дмитриева Вăрмар районĕнче хресчен çемйинче 1921 çулта çуралнă. Кил-йышра 4 ача пулнă. Çичĕ класс пĕтернĕ хыççăн 1937 çулта Канашри медицина училищине вĕренме кĕнĕ, медсестра профессине суйланă.***

Диплом илсенех Анастасия Дмитриевна Шупашкарти 1-мĕш больницăн ачасен уйрăмĕнче ĕçлет. 1940 çулта Ишек салинчи участок больницине вырнаçать, унта 25 çул вăй хурать. Хĕрарăм Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин çулĕсене тата ун хыççăнхи йывăр вăхăтсене куççульсĕр аса илеймест: «Больницăра сестрасем çитменрен икĕ çыншăн тăрăшнă. Çав хушăрах Ишек шкулĕнче 5-10 классенче вĕренекенсем валли «Вăрçăри санитарсен ĕçĕ» курса ертсе пыма тӳр килчĕ. Вăрçă вăхăтĕнче чăваш ялĕсенче чылайăшĕ трахомăпа, хырăм тифĕпе, кăрчанкăпа чирлетчĕ. Эпир килтен киле çӳресе мунча лартмалли, кашни çыннăн уйрăм ал шăлли пулмалли çинчен агитаци тăваттăмăр. Ял халăхĕ умĕнче тасалăх пĕлтерĕшĕ çинчен лекци нумай вуланă».

1943 çулта Анастасия Дмитриевна Ишекри Ленинградран эвакуаци йĕркипе куçса килнĕ ачасен çуртĕнче медицина сестринче ĕçлеме пуçлать, 150 шăпăрлан сывлăхне тĕрĕслесе тăрать. «Ачасем чупса пыратчĕç те: «Анне!» – тесе ыталаса илетчĕç. Манăн чĕре вĕсемшĕн кулянниpe ырататчĕ. Вăрçă халăха мĕн чухлĕ нуша кăтартмарĕ-ши!?» – аса илет вăл.

1985 çулта çав ача çуртĕнче пурăннисем /ун чухне çитĕннĕ çынсем ĕнтĕ/ Ишек салине тĕл пулăва килнĕччĕ. Манăн алăра – Шупашкар районĕнчи «Ленинец» хаçатăн /халĕ «Тăван Ен»/ 1985 çулхи çĕртме уйăхĕн 20-мĕшĕнче тухнă номерĕ. «Ленинград ачисем – тăван Ишекре» статьяра çакăн пек йĕркесене вулатăп: «Анастасия Дмитриевна медсестран та аса илмелли нумай. Вăл çав вăхăтра пур ачашăн та шурă халатлă анне пулнă...» Çак тĕл пулу вăхăтĕнче Анастасия Дмитриевна икĕ хурăн лартнă. Ку йывăçсем халĕ те кашни çуркуннех симĕс пурçăн тутăр çыхаççĕ.

Анастасия Дмитриевнăн награда питĕ нумай. Унăн ĕç стажĕ 40 çул ытла. Вăл – ĕç ветеранĕ. Ишекре ĕçленĕ вăхăтра çамрăк Настаç Мăн Марка каччипе Степан Иванович Быковпа çемье çавăрать. Вĕсен виçĕ ывăл /Валерий, Владимир, Владислав/ тата пĕр хĕр /Лариса/ çуралаççĕ. Степан Иванович та Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче çапăçнă. Ăна вăрçă пуçлансан иккĕмĕш кунне фронта илсе каяççĕ, тăван яла вăл 1946 çулта çеç таврăнать. Ăста кăна çапăçма тӳр килмен-ши унăн? Япони империалисчĕсемпе те кĕрешнĕ С.Быков. Икĕ хутчен йывăр аманнă, контузи пулнă. Ахальтен мар Степан Иванович тĕрлĕ наградăна тивĕçнĕ. Йывăр сурансене пула ветеран 1987 çулта çут тĕнчерен уйрăлчĕ.

Çакăн пек хастар çынсем туптанă та ĕнтĕ Çĕнтерĕве.

■ **Екатерина ГРИГОРЬЕВА.**
Шупашкар районĕ,
Мăн Марка

*Ас тăвăм*

# Фронта хăй ирĕкĕпе кайнă

***Шупашкар районĕнчи Хăймалакассинче çуралса ӳснĕ Михаил Косарев 1941 çулхи çурла уйăхĕнче Çĕрпӳри фельдшер-акушер шкулĕнчен ăнăçлăн вĕренсе тухать. Алла хĕрлĕ диплом илсен эрнеренех Ишлейри çар комиссариатне çул тытать. Хăй ирĕкĕпе фронта яма ыйтса рапорт çырать. Çар комиссариачĕ комсомолец ыйтăвне тивĕçтерет.***

Çар фельдшерĕн фронтри хĕсмечĕ Кантемир танк дивизийĕнче пуçланать. Фельдшер ĕçне пĕлсе йĕркелесе пынипе палăрать Михаил. Хаяр çапăçусенче çăмăл аманнисене медпунктра сиплет, йывăртараххисене госпитале ăсатать. Командовани медслужба сержанчĕн тăрăшулăхне асăрхать, служба тĕлĕшĕнчен ӳстерсех пырать. 1942-1943 çулсенче Михаил Косарев – 246-мĕш миномет полкĕн аслă фельдшерĕ. 1943-1944 çулсенче унăн служби танксене хирĕç кĕрешекен 456-мĕш полкра иртнĕ. Санитари службин пуçлăхĕ Хĕрлĕ Çăлтăр орденне, медальсем илме тивĕçнĕ. 1945 çулта Косарев службăра тăнă 4-мĕш танк дивизийĕ Германи çĕрĕ çинче çапăçнă.



Медицина службин кĕçĕн лейтенанчĕ Çĕнтерӳ кунне Берлинта кĕтсе илнĕ. 1946 çулта II степень Тăван çĕршыв вăрçин орденне кăкăр çине çакнă.

Михаил Иванович Косарев фронтовик Муркаш район эпидстанцийĕн тĕп врачĕнче ĕçленĕ. 1954-1989 çулсенче Янăшри фельдшерпа акушер пункчĕн, каярахпа врач амбулаторийĕн ертӳçинче вăй хунă. Ĕçри çитĕнӳсемшĕн «Халăхсен туслăхĕ» ордена тивĕçнĕ.

■ **Галина МИХАЙЛОВА**

# «Чăваш осоавиахимĕ» авиазвено паттăрлăхĕ

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи иккĕмĕш çул кĕрлет. Пур фронтра та хĕрӳ çапăçу пырать. Çав кунсенче Совет Союзĕнче, вăл шутра – Чăваш Енре те, СССР оборона фондне тăвас юхăм пуçланнă. 1942 çулхи çĕртме уйăхĕн пуçламăшĕнче Ишлей районĕнчи «Осоавиахим» подразделенийĕн хастарĕсем Т.Богомолова, А.Башмакова, Н.Варламова, З.Кирьянова, Э.Кикас, З.Митрофанова, П.Павлова, А.Сергеева «Чăваш осоавиахимĕ» ячĕллĕ самолетсен звенине тума укçа-тенкĕ хывма пуçару тунă, республикăра пурăнакансене ырă çак пулăма анлăн хутшăнма чĕнсе каланă. Ăна «Чăваш коммуни» тата ытти хаçат пичетлесе кăларнă. Патриотсен юхăмне районти «Колхозник хаçачĕн» ĕçченĕ Зинаида Митрофанова /вăл «Чăваш коммунин» хастар корреспонденчĕ те пулнă/ йĕркелесе ертсе пынă, хăй 500 тенкĕ хывнă.

Ишлейсен пуçарăвĕ республикăри ĕç коллективĕсенче анлă çул тупнă. «Чăваш коммуни» пĕлтернĕ тăрăх, икĕ уйăхра икĕ миллион та ик çĕр хĕрĕх пин тенкĕ ытла оборона фондне хывнă.

1942 çулхи çурла уйăхĕн 28-мĕшĕнче «Чăваш коммунипе» «Красная Чувашия» хаçатсенче çĕр-шывăн авиапредприятийĕсенчен пĕринче «Чăваш осоавиахимĕ» ятпа самолетсен звенине туса пĕтерни çинчен информаци пичетленĕ. Чăваш Республикин делегацийĕ Н. хулинче çар самолечĕсене экипажсене пани çинчен хыпарланă. Звено командирĕ пулма Совет Союзĕн Геройне Борис Трифонова çирĕплетнĕ. Авиазвенона пирĕн ентешсене те кĕртнĕ: Федор Афанасьевпа Егор Андреев – Çĕрпӳ районĕнчен, Петр Павлов – Элĕк районĕнчи Мăн Тукташран.

Çар самолечĕсене йышăнни çинчен Чăваш АССР ертӳçисене çырупа хыпарласа 72-мĕш разведавиаполк командованийĕ çапла çырнă: «Сирĕн укçа-тенкĕпе тунă самолетсем çирĕп алăра. Шантаратпăр: нимĕç оккупанчĕсене çапса аркатма вăй-хала та, пурнăçа та шеллемĕпĕр».

«Чăваш осоавиахимĕ» парнеленĕ вĕçев хатĕрĕсем бомбардировщиксем пулнă. Вĕсенче сывлăшран разведка тума аппаратура вырнаçтарнă. Самолетсене Çурçĕр-Хĕвел анăç фронтри 6-мĕш авиаци ушкăнне илсе çитернĕ. Летчиксем хăйсене шанса панă «Пе-2» самолетсемпе сывлăшран тăшман техникипе чĕрĕ вăйĕ ăçта вырнаçнине пĕлес тĕллевпе разведка тунă. Звено командирĕ Борис Трифонов капитан хăй ырă тĕслĕх пулнă: Совет Союзĕн Геройĕ ятне Финн вăрçинче /1939-1940/ тивĕçнĕскер, вăл «Чăваш осоавиахимĕ» самолетпа тăшман тылне 176 хут разведкăна кайнă. Тăшман самолечĕсемпе куçа-куçăн тĕл пулма пĕрре кăна мар тивнĕ ăна, кашнинчех çĕнтерӳпе вĕçленнĕ сывлăшри çапăçу. Пĕррехинче разведкăран таврăннă чухне «Чăваш осоавиахимĕ» самолета икĕ енчен тăшманăн икĕ самолечĕ хупăрланă. Б.Трифонов çухалса кайман: пĕр «Хейнкельне» пулеметран персе вут хыптарнă, тепри вара, çул çинче куçса пыракан хăйсен çарĕ çинех бомба тăкса, çапăçуран пăрăннă.

Б.Трифоновпа пĕрле разведкăра Федор Афанасьев ентеш те тăтăшах пулнă. Штаб валли тăшман çарĕн тылри вырăнĕ, унăн çар техники пирки кирлĕ информаци чылай пухнă вăл. Командовани хушнисене вăхăтра та туллин пурнăçланăшăн, тытăçусенче хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн ăна Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă.

«Чăваш осоавиахимĕ» самолета йышăннă хыççăн Ф.Афанасьев разведка вĕçевĕнче кашни кун тенĕ пекех пулнă. Кашни хутĕнчех борт дневникне кĕскен çапла çырса хунă: «Задание пурнăçланă». Командовани унăн паттăрлăхне тивĕçлипе хакланă.

1943 çулхи кăрлачăн 7-мĕшĕнче нимĕçсен 16-мĕш çарĕн малти линине разведкăна кайсан «Чăваш осоавиахимĕ» самолет хамăр аэродрома таврăнман. Çакăн пирки 72-мĕш разведполкăн журналĕнче çапла çырнă: «Самолет экипажĕ Старшов летчик, Афанасьев штурман, Шиндмес стрелок-радист заданирен таврăнман. Вĕсен шăпи паллă мар».

Тепĕр уйăхран кăна уçăмланать: самолета тăшманăн икĕ истребителĕ тапăнса вут тивертнĕ, вăл сывлăшрах çунса кайнă. Экипажран никам та çăлăнайман.

6-мĕш авиаци командующийĕн приказĕпе Федор Афанасьевич Афанасьев капитана вилнĕ хыççăн Тăван çĕршыв вăрçин орденĕпе наградăланă.

Б.Трифонов ушкăнĕнче çар заданийĕсене пурнăçлама тепĕр ентешĕн Петр Павловăн та хутшăнма тӳр килнĕ. Стрелок-радист пĕрре кăна мар хăюлăхпа палăрнă. 1943 çулхи пуш уйăхĕн 10-мĕшĕнче «Чăваш осоавиахимĕ» самолет тăшман аэродромĕсем çине разведка вĕçевне тухнă. Ку хутĕнче ăнăçлă пулман: Воль-Марино районĕнче тăшман самолета вут хыптарнă, вăл Антипово районĕнче ӳкнĕ. Совет Союзĕн Геройĕ Погорелов летчик вилнĕ. Штурман йывăр аманнă. Стрелок-радиста контузи пулнă. Çапла вара «Чăваш осоавиахимĕ» звенори тепĕр самолет /борт номерĕ 3/ пĕтнĕ.

Петр Павлов ентеш контузи хыççăн хăвăрт юсаннă, каллех строя тăнă, стрелок-радист ĕçне пысăк яваплăхпа пурнăçланă. «Чăваш осоавиахимĕ» самолетпа 1942 çулхи чӳк уйăхĕнчен пуçласа 1943 çулхи пуш уйăхĕччен разведкăра çĕр хут ытла пулнă. Вăл чылай медальпе ордена тивĕçнĕ. 1944 çулхи çĕртме уйăхĕн 4-мĕшĕнче çар ертӳлĕхĕ хушнине пурнăçланă чухне вилнĕ.

«Чăваш осоавиахимĕ» звенори самолетсене техника тĕлĕшĕнчен юсанă, вĕçеве хатĕрленĕ çĕрте электрооборудовани механикĕ Егор Андреев /Çĕрпӳ районĕнчи Елюй ялĕнчен/ пысăк ăсталăхпа палăрнă, çар наградисене тивĕçнĕ.

«Чăваш осоавиахимĕ» самолетсен экипажĕ Чăваш Республикин ертӳçисене панă сăмаха çирĕп тытнă: Аслă çĕнтерӳре вĕсен тӳпи пысăк.

■ **Галина ГЕОРГИЕВА.**
Шупашкар районĕ




## Тĕслĕх

# Кашни ăмăртуран – парнепе

***Ярмушкасем спортпа туслине пĕрре мар илтнĕ. Пĕрремĕш хут вĕсем çинчен район администрацийĕнче ĕçченĕ каласа панăччĕ. Çав тапхăртанпах Вăрнар тăрăхне кайса курас шухăшпа пурăнтăм. Çула тухма вăхăт тупрăмах: ăста спортсменсем патне шкула васкарăм.***



***● Физкультура вĕрентекен Георгий Сорокин /сылтăмра/ урок ирттерет.***

### *Шкул ача-пăча сассипе илемлĕ*

Çак каларăш аса килчĕ Ярмушка шкулĕн алăкне уçсан. Спортсменсен тĕп пуянлăхĕ – спортзал. Эпĕ пынă кун та унта ача-пăча хĕвĕшетчĕ. Физкультура предметне вĕрентекен Георгий Сорокин та çавăншăн хĕпĕртет. «Вĕренекенсем тăхтав вăхăтĕнче те спортзала чупаççĕ. Хускални сывлăхшăн питĕ пĕлтерĕшлĕ, ыттисем пек компьютер умĕнче ларманни е Интернет уçлăхне «чăмманни» савăнтарать», – терĕ учитель.

Чылай çĕрте физкультура урокĕсем çирĕплетнĕ йĕркепе ирттерççĕ. Ярмушка шкулĕнче вара физкультура тесен уксаххи те вăранать. Ачасем урокра чупаççĕ е мечĕк хăвалаççĕ кăна мар, спортăн тĕрлĕ енĕпе ăсталăха туптаççĕ. Малтан тĕрлĕ хăнăхтару туса шăм-шака çемçетеççĕ, хăвăрт утас мелсене вĕренеççĕ, старта еплерех хăвăртлăхпа тухмаллине хăнăхаççĕ тата ытти те. Чылай çул кунта сĕтелçи теннис, волейбол, баскетбол, футбол, кире пуканĕ йăтасси вăй илнĕ. Спорт секцийĕ те – виççĕ. Унсăр пуçне шкулта спорт шкулĕн филиалĕ ĕçлет. Çăмăл атлетикăпа туслисем Георгий Сорокин патне çӳреççĕ, футболистсем Геннадий Герасимов тренерпа туслă. Чăннипе, шкул футболисчĕсен çитĕнĕвĕсем те курăмлă. Секци кăçалхи вĕренӳ çулĕнче кăна уçăлнă пулин те çамрăк спортсменсем республика турнирĕсенче палăраççĕ. Акă çурхи каникул вăхăтĕнче вăрçăпа спорт ветеранне Михаил Зефирова асăнса иртнĕ ăмăртура «Гвардеец» /йышра – 2000-2001 çулсенче çуралнă яшсем/ пьедесталăн виççĕмĕш картлашки çине хăпарнă.

Кĕçĕн классенче пĕлӳ илекенсен урокĕсем ир вĕçленеççĕ, çапах та вĕсем ытти шкулти пек киле васкамаççĕ – спортзала е стадиона чупаççĕ. «Георгий Геннадьевич, пирĕн те хутшăнма юрать-и?» – тархаслаççĕ шăпăрлансем. Паллах, никамшăн та чару çук. Тĕрĕссипе, спортзал кашни кун /вырсарни кунсăр пуçне/ иртен пуçласа каçчен ĕçлет. Çавăнпа вĕрентекен пӳлĕмĕнчи вун-вун мечĕк ахаль выртмасть, кире пуканĕ те çителĕклех, йĕлтĕрсем те çĕнĕ йышшиех. Учитель спорт хатĕрĕсемпе тивĕçтерекен ырă çынсем пуррипе питĕ кăмăллă, анчах ăна çултан çул ача сахалланни пăшăрхантарать. «Лару-тăру улшăнмасан тепĕр вунă çултан шкулта футбол команди йĕркелемешкĕн те ача юлмĕ», – терĕ вăл.

Ачасен çитĕнĕвĕсемпе паллаштарма ыйтрăм та – сĕтел ешчĕкĕнчен хулăн тетрадь туртса кăларчĕ вĕрентекен. Çамрăк спортсменсен кăтартăвĕсене 14 çул /Ярмушка шкулĕнче ĕçлеме пуçланăранпах/ çырса пырать вăл. Шкулта тĕрлĕ çулта пĕлӳ илнĕ спортсменсемпе те мухтанаççĕ ку тăрăхра: çăмăл атлетика енĕпе Раççей спорт мастерĕ Радий Иванов, ирĕклĕ мелпе кĕрешсе палăрнă Линда Яковлева, бокс ăсти Николай Федоров. Тĕслĕхрен, тимĕр вăййипе туслă Екатерина Козлова халĕ те чылай турнира хутшăнать, электромеханика колледжĕн студентки «Хыпар» Издательство çурчĕ ирттерекен ăмăртура та кашни çул вăй виçет. Шкул ачисен хушшинче те пултаруллă спортсмен сахал мар. Вĕсенчен пĕри – 11-мĕш класра вĕренекен Саша Емельянов. Спортăн тĕрлĕ енĕпе ăсталăха туптаканскер районти ăмăртусенче пĕрре мар малти вырăнсене йышăннă. Кăçал вăл тăршшĕне сиксе пĕрремĕш вырăн йышăннă, Етĕрнере кире пуканĕ йăтассипе иртнĕ турнирта ылтăн медаль çĕнсе илнĕ. Унăн юлташĕ Валера Алексеев баскетболпа питĕ туслă, кĕрешӳçĕсен йышĕнче те маттур вăл. Хĕрсенчен чи хастаррисем – Кристина Михайловăпа Лиза Алексеева.

Георгий Сорокин хăй те ачаран спортпа туслă. Шкулта вĕреннĕ çулсенчех ирĕклĕ мелпе кĕрешекенсен тата футболистсен секцийĕсене çӳренĕ. Çав хавхаланупах И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университетĕнчен вĕренсе тухнă /1995/. 5 çул Калининăри коррекци шкулĕнче вăй хунă, 2000 çултанпа – ялти шкулта. Унăн ашшĕ Геннадий Илларионович та Ярмушка шкулĕнче 37 çул физкультура учителĕнче ĕçленĕ, колхоз чысне чылай ăмăртура хӳтĕленĕ. Халĕ вĕсен ĕçне ывăлĕ-мăнукĕ Роман тăсать. 9-мĕш класра вĕренекенскер «Химик-Август» командa вăйăçи. 2013 çулта Çтерлĕ хулинче иртнĕ Пĕтĕм Раççейри ял вăййисенче «Чи лайăх вылякан» ята тивĕçнĕ.

### *«Гвардеец» – пуçаруллисен организацийĕ*

Вăрнар районĕнчи 5 яла – Ярмушка, Пуканкасси, Авшак Элмен, Мăн Элмен тата Кивçурт Мăрат – Элмен тăрăхĕ теççĕ. Унччен унта «Гвардеец» пысăк хуçалăх кĕрленĕ. Шел те, паянхи кун унăн шăпи ыттисенни пекех хурлăхлă. Хăй вăхăтĕнче «Гвардеецсем» ĕçре те, спортра та, уявсенче те яланах хастар пулнă. Колхоз спортсменĕсем районта иртекен кашни ăмăртуран парнепе таврăннă. Йĕлтĕрçĕсемпе çăмăл атлетсен тупăшăвĕсенче, футболпа сĕтелçи теннис турнирĕсенче вĕсене никам та çитеймен. Акă 1982 çулта футбол команди район кубокне çĕнсе илнĕ, тепĕр пилĕк çултан район чемпионĕн ятне тивĕçнĕ, 1988 çулта – «Ылтăн пучах» кубокĕн çĕнтерӳçи. Акатуйри ăмăртусенче миçе хут палăрман-ши Ярмушкасем? Шкул команди сĕтелçи теннисла выляс енĕпе районта пĕрре мар мала тухнă, республика турнирĕсене темиçе хут хутшăннă. 1972 çулта районти «Çĕнтерӳ çулĕ» хаçатăн парнисене çĕнсе илессишĕн иртнĕ ăмăртура Элмен тăрăхĕн йĕлтĕрçисем В.Михайлов, Г.Сорокин, Г.Васильев, В.Анисимов тата Ю.Родионов пьедесталăн чи çӳллĕ картлашки çине хăпарнă.

Пысăк хуçалăх тахçанах саланнă пулин те çамрăк спортсменсем Элмен тăрăхĕн чысне спорт мероприятийĕсенче тивĕçлĕн хӳтĕлеççĕ. 2011 çулта Ярмушка шкулĕнчен вĕренсе тухнă хастар та маттур çынсем «Гвардеец» спорт организацийĕ йĕркеленĕ. Унăн тĕллевĕ – пулас ăрăва сывă пурнăç йĕркине тытса пыма хăнăхтарасси тата спортпа туслаштарасси. Ăна ку тăрăхра çуралса ӳснĕ, халĕ Шупашкарта пурăнакан Олег Васильев ертсе пырать. Организацире – 42 çын. Руслан Яковлев, Геннадий Егоров, Валерий Иванов, Олег Фомин, Николай Федоров, Андрей Георгиев çак ĕçе уйрăмах чунтан парăннă.

«Гвардеец» пуçарнипе ялта çулсерен темиçе ăмăрту йĕркелеççĕ. Çулталăк календарĕ районта сĕтелçи теннис енĕпе темиçе хут чемпион пулнă, нумай çул Ярмушка шкулĕнче ĕçленĕ Федор Соколова асăнса иртекен турниртан пуçланать. Çĕр-шыв хӳтĕлевçин кунĕнче Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин ветеранне, Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕн кавалерне Артем Яковлева асăнса йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвне ирттересси йăлана кĕнĕ. Унта хутшăнакансен йышĕ çултан çул нумайланать, тупăшура пĕчĕккисем те, аслă ăру çыннисем те вăй виçеççĕ. Çу уйăхĕн 9-мĕшĕ те спортсменсемшĕн пысăк уяв. Çав кун ял атлечĕсем чупăва тухаççĕ, 1999 çулта пуçарнă ăмăртăва кăçал та ватти-вĕтти хутшăннă. Пысăк тепĕр ăмăрту – «Туссене асăнса» мини-футбол турнирĕ. «Команда пух та футболла выля» чĕнӳпе иртет вăл. Çавăн пекех Ярмушка ял тăрăхĕнче пулăç кунне, ял уявĕсене, Пĕлӳ кунне анлăн паллă тăваççĕ. Республика тата район шайĕнчи ăмăртусене йĕркелеме те шанаççĕ вĕсене.

■ **Андрей МИХАЙЛОВ.**

Автор сăн ӳкерчĕкĕ

## Паттăрсене сума суса

***Çĕрпӳсем хăнăхнă ĕнтĕ: Аслă Çĕнтерӳ уявĕн программине спортсменсен чупăвне те кĕртеççĕ. Ăна пирвайхи хут 1979 çулта ирттернĕ. Пуçаруçи – вăрăм дистанцисене чупас енĕпе республика тата унăн тулашĕнчи ăмăртусенче сахал мар çĕнтернĕ ялти учитель Вениамин Трофимов.***

«Аттесемпе асаттесем фронта Михайловка ялĕпе юнашар вырнаçнă чукун çул вокзалĕнчен пуйăспа кайнă, – ăнлантарнă ун чухне Вениамин Трофимович. – Вăрçăран таврăнакан паттăрсен хулапа станци хушшине тепĕр хут «виçме» тивнĕ. Атьăр, вĕсене сума суса геройсен ячĕпе ятарлă чупу ирттерер». Килĕшекенсем тупăннă, чупăва «Паттăрлăх çулĕ» ят панă. Миçе спортсменпа физкультурник старта тухман пулĕ 35 çул хушшинче! Ача-пăча та, çитĕннисем те, ветерансем те. Çулсем иртнĕçемĕн вĕсен йышĕнче паллă спортсменсем те ӳссе çитĕннĕ. Сăмахран, Сăнав поселокĕнчи Алексей Александров, Çĕрпӳ хулинчи Инна Белова, Патăрьелти Евгений Гурьев тата ыттисем.

Кăçалхи чупăва 400 ытла çын хутшăнчĕ. Пурне те кая хăварса чупăва Чурачăк каччи, коопераци институчĕн студенчĕ Константин Елисеев чи малтан вĕçлерĕ. Хĕр ачасенчен Патăрьельти шкулта вĕренекен Надежда Павловăна çитекенни пулмарĕ. Çулĕсем тăрăх пултаруллисене тĕрлĕ ушкăнра палăртрĕç. Вениамин Трофимович та /кĕçех вăл 80 çул тултарать!/ тивĕçрĕ наградăна. Йĕкĕрварти Роза Батинская, Красноармейски районĕнчен килнĕ Виталий Егоров, Çĕрпӳри Геннадий Тимофеев, Сергей Ермолаев, Виталий Петров, Гаранинсен çемйи – вĕсем те çĕнтерӳçĕсем.

■ **Юрий ПЛОТНИКОВ**

## Кире пуканĕ

# Чемпионран тĕслĕх илет



Куславкка хулинчи 3-мĕш вăтам шкулта вĕренекен Дмитрий Константинов тăватă çул каялла, уйра мечĕк хăваласа чупнă чухне, футболист пулма ĕмĕтленнĕ. Çав тĕллевпех юлташĕсемпе пĕрле спорт шкулне çул тытнă. Анчах футбол секцине çырăнас вырăнне вĕсем кире пуканĕ йăтакансен ушкăнне лекнĕ.

Чăннипе, çак утăмшăн çамрăк спортсмен пĕрре те ӳкĕнмен. Паян вăл – районти тата республикăри спортсменсен хушшинче чи вăйли. Çакна çур çулти çитĕнĕвĕсем те çирĕплетеççĕ. Куславкка тăрăхĕнчи тимĕр вăййипе туслисен ăмăртăвĕнче чемпион ятне çĕнсе илнĕ яш пĕлтĕрхи раштав уйăхĕнче Кӳкеç поселокĕнче пулнă республика ăмăртăвĕнче çĕнтернĕ. «Хыпар» хаçатăн парнисене çĕнсе илессишĕн иртнĕ Пĕтĕм Раççейри турниртан та вăл тăван тăрăха çĕнтерӳпе таврăннă. Етĕрнере иртнĕ ăмăрту вара халĕ те асĕнчен тухмасть: унта шкул ачи кире пуканне 141 хут йăтнă-çке. Ку – çамрăкшăн питĕ пысăк кăтарту. ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕн Юрий Поповăн тата ЧР кире пуканĕ йăтакансен федерацийĕн ертӳçин Юрий Карповăн парнисене те тивĕçнĕ Дима. Республикăри спорт шкулĕсен спартакиадинче те ăна çитекенни пулман.

Мĕнпе илĕртет-ха çамрăка тимĕр вăййи? «Кире пуканĕ йăтни ӳт-пĕве çирĕплетет, ал-ура тĕрекленет. Пĕр-пĕр ĕçе пурнăçлама та йывăр мар», – терĕ спортсмен. Тусĕсем те ун пекех хăюллă та вăйлă, спорт шкулĕн сукмакне пĕрле такăрлатаççĕ. Акă Димăран икĕ çул кĕçĕнрех Дима Кузьмин та Етĕрнери ăмăртура пĕрремĕш вырăн йышăннă. Руслан Николаевпа Сергей Морковкин та вĕсенчен юласшăн мар. Тăваттăшĕ те ЧР тава тивĕçлĕ тренерĕ Иван Краснов патĕнче ăсталăха туптаççĕ.

Шкулта лайăх паллăсемпе вĕренекен Дима Константинов малашнехи пурнăçа çарпа çыхăнтарасшăн. Çавăнпа çамрăклах спортпа туслă пулни питĕ пĕлтерĕшлĕ иккенне палăртрĕ каччă. Паллă ентешĕ, кире пуканĕ йăтас енĕпе тĕнчипе чапа тухнă Сергей Кириллов пек пулма ĕмĕтленет чемпион.

■ **Егор АНДРЕЕВ.**

Автор сăн ӳкерчĕкĕ

# Вут-шу – чăваш халăхĕн çапăçу ӳнерĕ

***Çапла çирĕплетет йăхташăмăрсен çапăçу ӳнерне чĕртсе тăратма ĕмĕтленекен Алексей РОМАНОВ. Чăваш халăхĕн авалхи ӳнерĕ çинчен вут-шу шкулĕн çул пуçне каласа пама ыйтрăм.***

**– Алексей Егорович, чăваш халăхĕн авалхи çапăçăвĕн хăйне евĕрлĕхĕ мĕнре-ши?**

– Пăлхар-чăвашăн кĕрешӳ ӳнерĕ çамрăксене сывă пурнăç йĕркине хăнăхтарас, вĕсен ăсхакăлне çирĕплетес тĕллевпе йĕркеленнĕ. Хĕвел тухăç халăхĕсен кĕрешĕвне çывăхскер чăвашсен тĕнче курăмĕнчен никĕсленнĕ. Тупăшу вăхăтĕнче урапа, чавсапа, ал чăмăрĕпе, пӳрнесемпе, пуçпа кĕрешме юрать. Çав вăхăтрах «тăшмана» çĕклесе ывăтма, ыраттарма май пур. Çапăçу мелĕсемпе паллашакан çын аваллăха лекет, чăваш халăхĕ паттăр та хăюллă пулнине туйса илет.

**– Вут-шу ăнлавăн пĕлтерĕшне уçсамăр?**

– Вăл «вут» тата «шыв» сăмахсенчен пулнă. Чăвашсен авалхи «Вутчул» халапĕнче икĕ вăй тупăшнине çырса кăтартнă. Хайлав тăрăх – Вут Шыва çунтарса тĕп тăвасшăн пулнă, Шу Çулăма сӳнтерме хăтланнă. Çав вăхăтрах эпир тепĕр халапра Шу ятлă чăваш паттăрĕпе тĕл пулатпăр. Çапла вара тапăнакан вăл – вут, хирĕç тăраканĕ – шу. Кĕрешӳçе вут-шу арĕ тетпĕр. Вут-шу ăнлава «Чăваш чĕлхин ăнлантаруллă сăмах кĕнекине» те кĕртнĕ: çыннăн чун хавалне тата вăй-халне ӳстерессишĕн тимлекен кĕрешӳ ӳнерĕ.

**– Тренировкăра эсир тĕрлĕ ăнлавпа усă куратăр…**

– Вĕсене Чăваш патшалăх гуманитари институчĕн ĕçченĕ, паллă чĕлхеçĕ Геннадий Дегтярев йĕркелеме пулăшрĕ. Хăшĕпĕринпе паллаштарам-ха. Калăпăр, тĕпел. Кашни килти чи хисеплĕ вырăн. Пирĕншĕн те вăл питĕ сăваплă: тĕпелте çурта çутатпăр, юм калатпăр т.ыт.те. Тĕпел умĕнче яланах – тренировка умĕн те, вĕçленсен те – пуç таятпăр. Çан – этем ӳт-пĕвĕ /*çан-çурăм* сăмахпа танлаштарăр. – **Авт.**/. Хавал – шалти вăй, сывлăм – сывлав хăнăхтарăвĕсен тытăмĕ. Пĕр-пĕрне элтеш тесе чĕнетпĕр. Сум – ăсталăх шайĕ. Çапăçу вăхăтĕнче усă кураканнисем: тарт, ӳкер, ват, чыш, хир, çуп, тӳ, сир…

**– Сывлав хăнăхтарăвĕсем çинчен каларăр. Вут-шу «сывлăмĕ» еплерех?**

– Чăвашсем авалтанпах тĕрĕс сывламалли мелсене пĕлнĕ, кашни сывлăхлă пулма тăрăшнă. Çакна пĕр тĕпрен пулнă сăмахсем те çирĕплетеççĕ: сывла, сывлам /вздох/, сывал, сывлăх, сывлăш. Сывлав тытăмĕнче тăватă ăнлавпа усă куратпăр: варкăш – хырăмпа сывлани, сулхăн – кăкăрпа сывлани, шуçăм – хул пуççипе сывлани, ир – пĕтĕмĕшле сывлани. Çапăçура тĕрĕс сывлани питĕ пĕлтерĕшлине пур спортсмен та палăртма пултарать.



**– Сирĕн кĕнекĕрте «Эй, пирĕн пурнăça тытса тăракан Çӳлти турă! Тăшмана хирĕç тăма хăюлăх пар, ăна çĕнме вăй-хăват пар. Тăшман айне пулма ирĕк ан пар. Эй, Аслă турă, пулăш мана!» – тенĕ. Çапăçу мелĕсене вĕреннĕ чухне Çӳлти Аттемĕре кĕл туни пĕлтерĕшлĕ-и?**

– Вут-шу кĕрешӳ мелĕ кăна мар – пурнăç философийĕ. Тăшмана хирĕç çапăçăва кĕриччен пирĕн йăхташăмăрсем яланах турăран пулăшу ыйтнă. Халĕ те эпир пĕр-пĕр ĕçе пуçăниччен турра кĕл тăватпăр. Çавăнпа пирĕн тренировкăсем медитацирен пуçланаççĕ тата вĕçленеççĕ.

**– Вут-шу шкулĕ хăçан йĕркеленчĕ? Унăн кун-çулĕпе паллаштарсамăр?**

– Манăн аттепе анне – чăвашсем. Эпĕ Ташкентра çуралнă, çур ĕмĕр ытла унта пурăннă. Çамрăк чухне кĕрешӳпе, самбо-дзюдопа кăсăкланнă,1977 çултанпа каратэпе туслă. Чылай çул спорт шкулĕнче тренерта ĕçлерĕм, училище-техникум студенчĕсемпе милици ĕçченĕсене кĕрешӳпе каратэ ăсталăхне вĕрентрĕм. 2001 çулта тăван тăрăха таврăнсан чăваш халăхĕн авалхи çапăçу ӳнерне чĕртсе тăратма шухăшларăм. Çав çулах Г.Лебедев ячĕллĕ наци лицейĕнче ушкăн пухрăм, çитĕнӳсем те пĕчĕк марччĕ. Шел те, темиçе çул каялла, лицейăн шăпи пирки пурте пĕлеççĕ, ушкăн саланчĕ. Хальлĕхе çитĕннисемпе кăна ĕçлетĕп. Вут-шу шкулне 15 çын çӳрет. Пире пĕр ыйту канăç памасть: тренировка ирттерме ятарлă зал çук. 5 çул ытла электро-механика колледжĕн спортзалĕнче «пурăнтăмăр», паянхи кун вĕренӳ институтĕнче кĕтес тупрăмăр. Çывăх вăхăтра хулари пĕр вăтам шкулта вут-шу ушкăнне уçас тĕллевлĕ.

■ **Андрей МИХАЙЛОВ каласнă**

**Кăларăма Андрей МИХАЙЛОВ хатĕрленĕ.**

## Çĕнĕ сезон

# Стартра – велосипедçăсем

***Ака уйăхĕнче велоспортсменсен çĕнĕ сезонĕ пуçланчĕ. Çак тапхăрта республикăри тĕрлĕ район-хулара ăмăртусем те йĕркелерĕç, пирĕн ентешсем темиçе турниртан парнесемпе таврăнма та ĕлкĕрчĕç.***

Акă Чăваш Енри чи паллă велосипедçă Ирина Калентьева Австралири Кэрнес хулинче иртнĕ тĕнче кубокĕн иккĕмĕш тапхăрĕнче виççĕмĕш вырăн йышăннă. Унта çавăн пекех Вера Андреева, Ксения Кириллова, Надежда Антонова хутшăннă. Пикесем призерсен йышне кĕреймен пулин те лайăх кăтартусемпе палăрнă. Пирĕн тепĕр ентеш, Шупашкарти Олимп резервĕсен ятарлă 7-мĕш спорт шкулĕнче ăсталăха туптанă, «Интера-Катюша» команда гонщикĕ Дмитрий Игнатьев Сочире иртнĕ турнирта икĕ ылтăн медаль çĕнсе илнĕ. Ăста спортсмен уйрăм тупăшура тата ушкăнсен ăмăртăвĕнче пуринчен маттуртарах пулнă. Çак кунсенче республикăри велоспорт шкулĕн хастарĕсем хĕллехи Олимп вăййисен тĕп хулинче маунтинбайк енĕпе иртнĕ çĕршыв чемпионатĕнче Чăваш Ен чысне хӳтĕленĕ. Ăмăрту пĕтĕмлетĕвĕпе Татьяна Кузнецова çамрăк спортсменка пĕрремĕш вырăн йышăннă, Маргарита Семенова – иккĕмĕш, Евгений Гаврилов – тăваттăмĕш.



Куславккара спортăн тĕнче класлă мастерĕн, çĕр-шыв чемпионкин, Атлантăри Олимп вăййисене хутшăннă Надежда Пашковăн парнисене çĕнсе илессишĕн пысăк ăмăрту иртнĕ. Старта паллă спортсменсем те, çамрăк велосипедçăсем те тухнă. Çитĕннисен хушшинче чемпион ятне Раççей спорт мастерĕ, Канаш пики Ксения Кириллова тивĕçнĕ. Ытти ушкăнра çĕр-шыв кубокĕн призерĕ, Куславккари Анастасия Тимофеева тата Муркаш хĕрĕ Марина Уткина малти вырăнсене йышăннă. Арçынсенчен Шупашкар каччине Александр Краснова никам та çитеймен. Нумаях пулмасть Чăваш Ен велосипедçисем Çĕнĕ Шупашкар хулин чемпионатĕнче вăй виçнĕ. Чи пултаруллисем Чул хула облаçне федерацин Атăлçи округĕн ăмăртăвне хутшăнаççĕ.

■ **Олег МАСЛОВ**

# ТАМАША

питлев

## СУХАЛ МЫСКАРИСЕМ

Мĕншĕн-ха эпир, арçынсем, ахлата-ахлата туя çине таянса çӳреме пуçличченех мăйăх е сухал ӳстерме тăрăшатпăр? Хăвăртрах хура-шур курнă çынсен шутне кĕрес е сухалпа та пулин Карл Маркспа е Игорь Курчатовпа танлашас тесе-ши? Паллах, ку айванла шухăш. Çавна май çарти салтак пурнăçĕнчи пĕр самант аса килет.

Вильданов хушаматлă кĕçĕн сержант манăн мăйăх шăртланма пуçланнине асăрхарĕ те: «Халех хырса пăрахнă пултăр!» – тесе хăтăрса илчĕ. Юрать-ха, çакна пĕлнĕ пек «Нева» лезвие килтех кутамккана хунăччĕ.

Унтанпа авланса çемьеленсен тин мăйăхпа сухала ӳстерсе ятăм. Ман хăтлану арăма килĕшмерĕ, «Халех хырнă пултăр, унсăрăн санпа урама та тухмастăп», – тесе хăратрĕ. Мĕнех, ун сăмахĕсене хăлхана чикрĕм. Сухал нуши кунпах вĕçленмерĕ-ха.

Иртнĕ çул Воронеж облаçĕнчи «Красинский» хуçалăхра çур çул ĕçлеме тиврĕ. Мана ирхине çичĕ сехетрен пуçласа хĕвел аниччен улма-çырла базине хураллама шанчĕç. Хырăнма мар, тепĕр чухне вăхăтра апатланма та май килместчĕ. Киле таврăннă çĕре кĕреçене аса илтерекен сухал кĕпе çухине хупласа хучĕ. Акă эпир Канаш урлă иртекен «Новороссийск-Барнаул» пуйăса кĕтсе Воронеж облаçĕнчи Лиски хулинчи чукун çул вокзалĕнче ларатпăр. Халăх лăк тулли! Йытă çавăтнă икĕ полицейски калле-малле ута-ута пассажирсен документĕсене, сумкисене, кутамккисене тĕрĕслеççĕ. Нумаях пулмасть «хура сухаллисем» Мускаврa, Волгоградра хăйсен сăтăрла ĕçне туни палăрчĕ. Ман умра аллине резина патак тытнă, умне «чукун çул транспорчĕн хуралĕ» тесе çырнă жетон çакнă арçын чарăнчĕ те пĕр шӳтлесе, пĕр хăратса «Абдулла кум, ăçталла çул тытатăр?« – тесе ыйтрĕ. Паспорта кăтартма, хам çинчен пĕр пытармасăр каласа пама тиврĕ. Хам та шалти ĕçсен органĕсен пенсионерĕ пулнине пĕлсен, самантрах унпа пĕр чĕлхе тупрăмăр. Хăй те тивĕçлĕ канура, апла пулин те кĕрĕк «йăваласа» ларасшăн мар. «Красинский» хуçалăх пирки те илтнĕ иккен, хăй те «калăма» çӳренĕ.

Сăмах май, мана вăл билет туянма та пулăшрĕ.

Киле таврăннă-таврăнманах мăшăрăм манăн сухала «тапăнчĕ». «Хырса пăрахиччен сăн ӳкерттерем-ха», – терĕм те çывăхри фотоательенелле лăпăстатрăм.

■ **Александр МОКИН**

йĕплĕ сăмах

## ĔНСЕ ХЫÇÇА ШУХĂШЛАСАН...

● Тупăш илес тесе вăл «пурнăç лашине» питĕ хытă хăваланă. Анчах алла тупăшĕ лекеймен, йĕрке хуралçисем вара ăна хăваласа çитнĕ.

● Вăл кĕнеке пухма юратнă. Чи юратни вара – Перекет банкĕ паракан кĕнеке пулнă.

● Пуçлăх сана айванла ыйту парсан та ăна айван çын пек ан хуравла.

● Елена К. юрăçă тава тивĕçлĕ ят илнĕ-ха, анчах тăван амăшĕнчен тав сăмахĕ илтеймен – ватă çынна мансах кайнă.

● «Эпĕ тĕрĕссине калатăп» тесе кăкăр çапса çӳриччен хăвна тĕрĕс тытма вĕрен. Унсăрăн çынсем сана ĕненмĕç. Тем парсан та.

● Ухмахсем пĕччен тăрса юласран хăраççĕ, ăсли вара çак самантпа киленсе пурăнма май тупать.

● Çĕр туртăмĕн вăйне ӳсĕр çын кăна лайăх туять – ура çине тăма йывăрлансан.

● Хĕрарăм санăн умăнта айăпа кĕчĕ е кӳрентерчĕ тĕк унран... каçару ыйт. Тен, каçарĕ – кăмăлĕ уçăлсан.

● Килте ватă хĕр пулсан йытă та кирлĕ мар теççĕ. Ман шухăшпа, килте кăна мар, урамра та...

кĕске халап

## СĂМАХ ÇЕРÇИ МАР

### /е Саваламан йĕркесем/

Апат çинĕ чухне, имшерленес тесен, икĕ-тăватă хут шухăшласа илмелле.

***/Телекуравра тухтăр тухса калаçнинчен/.***

Çанталăк сасартăк ăшăтнине пула тата çул çине тăварпа хăйăр хутăш сапса хăварнипе эпир çĕленĕ пушмаксем вăхăтсăр çĕтĕлеççĕ.

***/Çăхав çырнă хыççăн панă хуравран/.***

Шалта карнă пăралуксене тултан карса яма май çук-ши?

***/Çурт-йĕр кантурне янă çыруран/.***

Кашни хĕр хальхи самантра хăйĕн чысне – вăл вараланнă пулсан та – хытă хӳтĕлеме тивĕç.

***/Радиохыпарлав пĕлтерни/.***

Эпир хамăр шухăшласа тупнă сăнарсем тĕлĕшпе пурте яваплă.

***/Çыравçă пĕр пухура калаанинчен/.***

Паянхи кун ветерансене хисеплесе тухас пулсан хăрах пӳрне те çителĕклĕ.

***/Пухура пĕр ăçтиçук пуçлăх тухса калаçнинчен/.***

Тăхтаман хăйĕн арăмĕ пирки тивĕçлĕ информаци илсенех ăна хирĕç ĕç пуçарма шухăшлать.

***/Шкул ачи хайлавĕнчен/.***

Кĕске кулăшсем

**Сăлтавĕ паллă**

**– Анне, этем чăнласах упăтерен пулнă-и?**

**– Тĕрĕсех, ачам.**

**– Ăнланмалла. Тен, çавăнпах упăтесем сахалрах курăнма пуçларĕç.**

**Урăххи айăплă**

**– Санăн ачу пирĕн хваттер чӳречине чулпа пенĕ.**

**– Кĕленчине çĕмĕрнĕ-и?**

**– Çук, тĕл лектереймен çав.**

**– Апла тăк манăн ывăл пулман вăл. Вăл персен ним мар лектернĕ пулĕччĕ.**

**Паттăр автансем**

**Лутра Павăл кӳршипе калаçать.**

**– Ĕнер Карсак Çимунĕ сăмакун юхтарнă пек туйăнать.**

**– Ăçтан пĕлтĕн?**

**– Ара, унăн автанĕсем манăн йытта та хăратса пĕтернĕ.**

**Шантарать**

**Пĕри хăйне хӳтĕлеме ваккатa тара тытнă.**

**– Эсĕ мана мĕн пулнине тĕрĕссине каласа пар, халь юптарнă пек унталла-кунталла ан пăркалан, – сĕнет ваккат.**

**– Вара?**

**– Мĕн вара? Судра хамах сана хӳтĕлесе кирлĕ пек, ĕненмелле суйса каласа парăп, – шантарать ваккачĕ.**

**Ӳпкев**

**Арăмĕпе упăшки лавккара тавар суйлаççĕ.**

**– Килте пĕр тумлам эрех юлман, эсĕ çăкăр туянасшăн! – ӳпкелешет упăшки.**

**Геннадий ФЕДОТОВ хатĕрленĕ.**

*Çĕнĕ куçарусем*

# Микрофон умĕнчи юрăç




Хăй хыççăн кашни вăхăтсаманах нумай-нумай çын чунчĕрине хускатса, çĕклентерсе, пăлхатса яракан поэт, юрăç, артист кăларса хăварать. Владимир Семенович Высоцкий пирĕн ăрушăн, çамрăклăхăмăр çирĕммĕш ĕмĕрĕн 70-80-мĕш çулĕсенче иртнисемшĕн, пултарулăхĕпе халĕ те çутатса тăрать.

Литература пирĕншĕн пĕлӳпе пĕрлех ырă ĕмĕт-туйăмсен çăл куçĕ те, йăпану та пулнă. Сăвăсене манăн сасăпа вулас килетчĕ. Кăмăл-туйăмпа шухăшсене, чун-чĕм пахалăхĕсене тĕпĕ-йĕрĕпе уçса кăтартма, чун, ăс-тăн патне çитерме çавăн пек çеç пулать пек туйăнатчĕ.

Высоцкий пирки вара ку тĕлĕшпе чи çӳллĕ шая хăпарнăскер теме пулать. Хăйĕн çеммипе, гитара каласа хăйĕн хăрăлтăрах сассипе чуна тивмелле, асра юлмалла, çав тери ĕнентерӳллĕн çитерме пултарнă вăл хăй калас тенине куракан, итлекен патне. Хăй мĕнпе килĕшнине е килĕшменнине, мĕне курайманнинесивленине, мĕншĕн савăннипе мĕншĕн чунне ыраттарнине пĕтĕм ăш-чикне уçса, тавăрса, çап-çара нервĕсене карăнтарса пырне хыртарса кăшкăрнă, макăрнă, калаçнă, шӳтленĕ, кулнă, юрланă концерт залĕсенче, театр сцени çинче. Ытларах, паллах, уçă кантăксем çине кăларса лартнă магнитофон динамикĕсенчен янăранă унăн сасси.

90-мĕш çулсен пуçламăшĕнче йывăр чире пула вырăнпах выртнă чухне мана такам /ас тумастăп халĕ/ В.Высоцкин Чăваш кĕнеке издательствинче 1989 çулта пичетлесе кăларнă «Нерв» ятлă сăввисен пуххине парнеленĕччĕ. Кĕнекене уçсан чи малтанхи «Песня певца у микрофона» сăввине вуласанах эпĕ пĕр тĕлĕнсе, пĕр çунатланса кайрăм... Кам хăçан та пулин микрофон умĕнче ĕçлесе курнă, çав питĕ лайăх ăнланĕ кăна. Çак ĕç-хĕлĕн чи пĕчĕк нюансĕсене, самантлăх туйăмĕсене, хавхаланăвĕсене, ыратăвĕсене, иккĕленĕвĕсемпе чун ăнтăлăвне пĕтĕмпех шута илсе мĕн тери вăйлă, мĕн тери тĕплĕн çырса кăтартма пултарнă автор!

Ман пуçра темшĕн çак сăвва чăвашла куçарас шухăш çуралчĕ.

Кăранташ илтĕм те тӳрех /библиотекарьсем каçарччăр ĕнтĕ/ кĕнеке страници çинех, сăвă йĕркисен хушшинех, питĕ вĕтĕ сас паллисемпе çырса куçарма пуçларăм. Ытлашши нумаях та нушаланмарăм – куçарса пĕтертĕм. Паллах, ун хыççăн ытти мĕн пур сăвва пĕр сасă палли сиктермесĕр вуласа тухрăм.

■ **Владимир СУРКОВ**

*Вулакансене В.В.Высоцкин хам куçарнă сăввисемпе паллашма сĕнетĕп.*

***Владимир ВЫСОЦКИЙ***

## Микрофон умĕнче

Куçа шарса ӳкет ман витĕр çутă.
Пĕр хăнăхнă ĕçе каллех эп путăп.
Тăратăп, микрофонăм – манăн турăш...
Çук-çук, паян вăл – вутлă амбразура.

**Хушса юрламалли:**
Прожектор, рамăпа хунар
Каварлашса сапаç кăвар
Аяккăм, çурăм, питĕм тăрăх...
Ах, шăрăх! Шăрăх!

Микрофона, туятăп, çывăх мар эп –
Ман сассăм такама та йăлăхтарĕ.
Тунам пĕр чĕптĕм çеç – суя кăварĕ
Пĕр шелсĕр вăйланса чуна çунтарĕ.

**Х.ю.**

Вăл эсремет пек: çивĕчрен çӳхе!
Кăштах çеç йăнăшсассăн та – сисет.
Сурать «Хевтеçĕм çук» тени çине,
Хушать илмешкĕн тĕрĕс нотăсем.

**Х.ю.**

Паян пушшех те эп хăрăлтататăп.
Анчах сасса улăштарма хăратăп.
Чун хĕлĕхне кăштах кăна парсан та
Тӳрлетес çук ăна вăл – тем парсан та.

**Х.ю.**

Авкаланать çĕлен пек микрофон,
Пуçне хăрушшăн пăркалать. Пĕлетĕп:
Самантлăх чарăнсассăн – эс сăхан.
Юрлас пулать: вилсен вилетĕп.

**Х.ю.**

Ан йăшăлтат, ан хăй тек тапранмашкăн.
Эп куртăм сăнă: эс – çĕлен – чухлатăп.
Эп хам – асамçă халь çĕлен-калташăн.
Юрлакан мар, эп – кобра, ăрăмлатăп.

**Х.ю.**

Вăл çăткăн чĕпĕ евĕр выçлăхла
Çăвартанах сасса хыпса чăмларĕ.
Пуçран перет вăл тăхăр грамм тăхлан.
Хул çĕкленмест – алла тăллать гитара.

**Х.ю.**

Каллех!.. Пулмасть-тăр çакăн вĕçĕ...
Ман микрофон мĕскер вăл, мĕн ун ĕçĕ?
Вăл халь çурта пек питĕм умĕнче.
Анчах çунмасть. Эп – çылăхлă çын çеç.

**Х.ю.**

Ман кĕввĕм – ансатрах гаммăсенчен.
Анчах чуна сутам – ку ун саманчĕ:
Çапать пырса питрен те куççенчен
Çав микрофон мĕлкийĕн саламачĕ!

**Х.ю.**

Куçа шарса ӳкет ман витĕр çутă.
Кĕтем-ши шăплăха е тăвăл тухĕ?
Тăратăп... Микрофонăм – манăн турăш...
Çук-çук, паян вăл – вутлă амбразура.

**Х.ю.**
Прожектор, рамăпа хунар
Каварлашса сапаç кăвар
Аяккăм, çурăм, питĕм тăрăх...
Ах, шăрăх! Шăрăх!

## Ĕлкĕреймерĕм

***/Романтик тунсăхĕ/***

Кутамккари вĕт чул пек вакланасшăн
Хам ăшăмра хамах шăкăртатап.
Тунсăхăма хуйха эп çавăрасшăн –
Кичемлĕхре асамлăхах шырап...

Пĕрре кăна уçман Çĕн Тĕнчене,
Кивви пайланнă лаптăксем çине.
Çук вăрттăнлăхĕ пирамидăсен,
Эсрел панче гусар та пиратсем.

Тем те пĕлен этепсĕрсен эшкерĕ
Тăрса тухайнă вĕççĕр – шăкăрин.
Тупсăм тупаймăн пулмасан укçу,
Тек «Эврика!» темешкĕн шанчăк çук.

Чакăл тусен шалка çамки çинчен
Ӳксе эп хуçăлма ĕлкĕреймерĕм.
Ман ылтăна та Клондайк енчен
Пуçтарнă – варкăшмасть хура элемĕм.

Юмах киммисене хупланă юшкăнпа,
Чи юлашки çĕрет-тĕр могикан та.
Хурах карапĕсем выртаççĕ типĕтсе
Ăшăх шывра ырхан аякĕсе.

Кĕтессе çакнă ыр кинжалăмсем
Йĕннисенче выртаççĕ хĕсĕнсе.
Пĕртен пĕр шанчăка – хăмăш сулла
Хысак çумне çапса аркатнă
мăн хумпа.

Йышран юлташăмсем тухса ӳкеççĕ –
Вĕсен ĕмĕт-тĕллевĕ пурнăçланнă.
Пысăккине часрах алла ярса илеççĕ,
Хыçри кĕпер айне пушар чĕртеççĕ.

Сипетсĕр вăйăпа алхасакан
Авантюрист таврашĕ сахалланчĕ.
Вĕсем халь прерире – кĕтӳ хăвалакан...
Мустанг майлах пуласшăн учĕ çеç!

Эп – чысшăн çапăçас текен çĕрте,
Дуэлĕмсем йăлт пулса иртнĕ.
Чĕнекенни те, килĕшекенни те
Е килĕшнĕ, е пурте вилсе пĕтнĕ.

Ман ĕçĕм-хĕлĕме те мансăрах
Пурне те тунă пирĕн пулăшусăр.
Туяннă çупкă йĕксĕксем, часах
Кайса пăчланнă чыссăр-сумсăр.

Тем парăттăм пересшĕн Дантеса:
Анчах та, шел, кăшт каярах çуралнă...
Мĕскер тăвас? Тен, вăрттăн çаратас
Нотр-Дамран ăçтиçука халь манăн?

Ытти ĕмĕрсенчи кун-çулсенче
Ман пикесем, эх, пурăнса ирттернĕ...
Эп чăннипех е тĕлĕкĕмсенче
Саван тӳшексене йăлт йышăнса пĕтернĕ.

Ярса илейнĕ эп вилес çĕре те:
Вителĕк-и вăл, е курăк-и, е юр...
Куççуль тăкса сиплевçĕ йăмăксем те
Çук, манра мар çав, çуса янă, çук...

Туссем те вĕтĕ ала витĕр юхрĕç –
Унтан килмен никам та каялла.
Ыр вилĕмпе кайни – пĕри те çук-тăр,
Ытла та ир, пĕр сарăмсăр, паллах.

Кĕпе хывмасăр, çылăха туймасăр
Хăшĕ-пĕри вĕçлерĕ кун-çулне.
Мухтавласа, пĕрре те ылханмасăр
Пушатрĕç лăпкăн çеç куркисене.

Тепĕрисем пĕлсе те, чухласа та
Кирлĕ чухне юрларĕç те
пулассине сиссен,
Пурте çĕкленчĕç çӳлĕ çулпалан...
Эп ĕлкĕреймерĕм.
Юлтăм, çĕкленмерĕм!

## Аистсем

Янкăр кун. Тӳпере – тап-таса...
Тимĕр-тăмăр çĕре таптаса,
кĕмсĕр-кемсĕр кĕрлет, ахăрать.
Йывăç сĕткенĕпе макăрать.

Тĕтĕм-сĕрĕм тăрать – хĕрес пек.
Çавăрмаççĕ йăва аистсем.

Пучах – ылтăн: епле
ĕлкĕрес?..
Акни пулчĕ, элле, ахалех...

Янтарь тĕслĕн мĕскер тĕлкĕшет?
Ку – Пушар... Тыр-пула тĕшĕрет.

Инкекрен мĕн пурри тарчĕçĕ.
Пĕтнĕ кайăк юрри – çăхан çеç!

Йывăççем – кĕл, тусан айĕнче.
Юрăсем чарăнсан килĕрен,

Юратма та манать çут тĕнче –
Курайманлăх паян кирлĕрех!

Тĕтĕм-сĕрĕм тăрать – хĕрес пек.
Çавăрмаççĕ йăва аистсем.

Çĕрĕм-шывăм пĕрех ахлатать,
Вăрман тăрри çӳле кармашать

Вăрçăченхи пекех кашласа...
Вĕççĕр ахрăм текех хашлатать.

Тарса пĕтнĕ пурри тухăça.
Çук тек кайăк юрри, аист çук!

Тĕрлĕ сасă çӳрет уçлăхра.
Халь те темĕн кĕрлет анăçра.

Шăппăн çеç такам кăшкăртăр –
Ут ури сас парать тă-пăр-тăк!

Тарса пĕтнĕ пурри тухăça
Пуш-пушах пӳрт тăрри – аист çук...

## Çулăм – асăну палли

***Улатăрти çамрăксем кашни çул çу уйăхĕн 9-мĕшĕнче каçхине çулăм чĕртсе урампа утаççĕ. Пĕлтерĕшлĕ мероприятие кăçал та чылай çын хутшăннă. Вĕсен йышĕнче – ветерансем, студентсем, Ф.Ушаков çветтуй воин ячĕллĕ дружина хастарĕсем, яш-кĕрĕмпе хĕр-упраç...***

Вăрçăра пуç хунă салтаксене халалласа лартнă палăк умĕнчи лапама пухăннисене Улатăр хулин администрацийĕн пуçлăхĕ Михаил Марискин саламланă. Вăл чи сумлă хăнасене – ветерансене – паттăрлăхшăн тав тунă, çамрăксене вĕсенчен тĕслĕх илме каланă. Палăк умне чечексем хунă хыççăн тĕп ĕç пуçланнă. Çулăма Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин ветеранĕ Иван Алтушкинпа Улатăрти ял хуçалăх техникумĕн студенчĕ Андрей Суханов чĕртнĕ. Ыттисем пĕрин хыççăн тепри çулăма тивертсе кĕпер патне утнă. Унта тĕрлĕ тĕспе çунакан сулла шыва янă. Юлашкинчен пурте фейерверкпа киленсе савăннă.

**Е.АНДРЕЕВ.**

## Паян «Сывлăх» хаçатăн çĕнĕ номерĕ пичетленсе тухрĕ



**● Хăлха çине – чуста.**
**● Гастрит нушинчен.**
**● Пĕтĕмпех – çарăкран.**
**● Вăрăм ĕмĕр эликсирĕ.**
**● Подагра чухне апата суйласа çимелле.**
**● Чăмла-чăмла пурнăçа тăсатпăр.**
**● Холестерина аванах чакарма пулать.**
**● Чăрăш тăрри – пĕвер, чага – пӳре валли.**
**● Сăра алкоголизмĕ сарăлсах пырать.**
**● Хĕç курăкĕ – мухтавлă сиплевçĕ.**

**реклама пĕлтерӳ**
Факс: /8352/ 28-83-70.
E-mail:hypar2008@rambler.ru
Тел.: 28-83-70.
316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ.

### ПРОДАЮ

**66.Заборы кованые.** Т. 89276689587.

**172.Гравмассу, керамблок,** песок, **щебень.** Д-ка. Т. 89023277585.

Ядринская районная администрация сообщает, что по результатам открытого аукциона по продаже и предоставлению в аренду земельных участков, проведенного 13.05.2014 г., победителями признаны следующие участники:

Лот 1. В собственность за плату для сельскохозяйственного производства (пчеловодство), расположенного по адресу: Чувашская Республика, Ядринский район, с/пос. Большечурашевское, с кадастровым номером 21:24:160201:154, площадью 67413 кв.м.; цена установленная торгами 52380 руб.; победитель - Матвеев С.Н.

Лот 2. В собственность за плату для ведения сельскохозяйственного производства, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Ядринский район, с/пос. Большесундырское, с кадастровым номером 21:24:180302:557, площадью 22000 кв.м.; аукцион признан несостоявшимся в связи с отсутствием заявок.

Лот 3. В собственность за плату для ведения сельскохозяйственного производства, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Ядринский район, с/пос. Ядринское, с кадастровым номером 21:24:090107:220, площадью 15978 кв.м.; цена установленная торгами 11408 руб.; победитель - Григорьева Г.А.

Лот 4. В собственность за плату для сельскохозяйственного производства, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Ядринский район, с/пос. Персирланское, с кадастровым номером 21:24:131002:91, площадью 4500 кв.м.; цена установленная торгами 3591 руб.; победитель - Рыбаков Н.И.

Лот 5. Продажа права на заключение договора аренды земельного участка сроком на 25 (двадцать пять) лет (годовой размер арендной платы) для ведения сельскохозяйственного производства, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Ядринский район, с/пос. Хочашевское, в юго-западной части кадастрового квартала 21:24:192301 с кадастровым номером 21:24:000000:2202, площадью 113630 кв.м.; цена установленная торгами 33330 руб.; победитель - ООО "МЦ "Созвездие".

Лот 6. Продажа права на заключение договора аренды земельного участка сроком на 25 (двадцать пять) лет (годовой размер арендной платы) для ведения сельскохозяйственного производства, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Ядринский район, с/пос. Хочашевское, земельный участок расположен в северной части кадастрового квартала 21:24:190404, с кадастровым номером 21:24:190404:168, площадью 17762 кв.м.; цена установленная торгами 4935 руб.; победитель - ООО "МЦ "Созвездие".

Лот 7. Продажа права на заключение договора аренды земельного участка сроком на 49 (сорок девять) лет для разведения промысловых пород рыб, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Ядринский район, с/пос. Большесундырское, с кадастровым номером 21:24:180204:373, площадью 9768 кв.м.; цена установленная торгами 10769 руб.; победитель - Шуркин А.В.

Лот 8. Продажа права на заключение договора аренды земельного участка сроком на 3 (три) года для пчеловодства, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Ядринский район, участок находится в восточной части кадастрового квартала 21:24:120305, с кадастровым номером 21:24:120305:69, площадью 500 кв.м.; цена установленная торгами 5266 руб.; победитель - Потапов А.А.

Администрация Хозанкинского сельского поселения Красночетайского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории "земли сельскохозяйственного назначения" с кадастровым № 21:15:000000:584, местоположением: Чувашская Республика, Красночетайский район, Хозанкинское сельское поселение, с. Хоршеваши для сельскохозяйственного производства, площадью 204168 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу 429046, Красночетайский район, д. Санкино, ул. Ленина, дом 6 (здание администрации), с 8-00 до 17-00 часов ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8(83551) 2-17-57.

### Уважаемые абоненты - потребители природного газа!

Надлежащее содержание газовых приборов, безопасное и рациональное пользование газом являются обязанностями абонента - потребителя газа. Это достигается, в том числе, и путем проведения технического обслуживания (ТО) ВДГО специализированной эксплуатационной организацией ОАО "Газпром газораспределение Чебоксары" в лице городских, районных и межрайонных филиалов, с которыми абоненты обязаны заключить договор на ТО и ремонт ВДГО.

Периодичность ТО зависит от вида, марки и срока эксплуатации оборудования. Стоимость ТО неотработавшей свой ресурс 4-конфорочной плиты составляет 174 руб. (3-конфорочной - 153 руб., 2-конфорочной - 132 руб.), периодичность - 1 раз в 3 года; ТО газового проточного водонагревателя обойдется в зависимости от марки в 212 - 285 руб., периодичность - 1 раз в 2 года; ТО отопительного котла отечественного производства - от 271 до 524 руб., периодичность - 1 раз в год. ТО любого отработавшего установленный изготовителем ресурс бытового газопотребляющего оборудования должно выполняться ежегодно.

Филиалы ОАО "Газпром газораспределение Чебоксары" оказывают также услугу по установке поквартирных приборов учёта газа (ПУГ) в существующем газифицированном жилищном фонде. Стоимость работ по установке ПУГ в многоквартирном доме без применения сварочных работ в зависимости от марки газового счётчика составляет от 691 руб. до 1080 руб., с применением сварочных работ - в зависимости от диаметра газопровода и количества приборов, присоединенных к общему стояку, - ориентировочно 3200-4500 руб. (цены указаны без стоимости счётчика, термозапорного клапана, дополнительного крана и гибких подводок к газоиспользующему оборудованию).

Подробная информация размещена на официальном сайте ОАО "Газпром газораспределение Чебоксары" www.chsetgaz.ru в разделе "Информация для населения".

Согласно "Порядку проведения поверки средств измерений", утверждённому постановлением Госстандарта России от 18.07.1994 №125 (с изменениями от 26.11.2001 №476), поверка счётчиков газа проводится с целью определения и подтверждения их соответствия установленным техническим требованиям и выполняется аккредитованной метрологической службой. Таковыми в Чувашской Республике являются лаборатория метрологии ОАО "Газпром газораспределение Чебоксары" и ФБУ "Чувашский ЦСМ".

Гарантированный интервал времени, в течение которого показания ПУГ можно считать достоверным (межповерочный интервал) устанавливается производителем ПУГ по согласованию с Государственной метрологической службой - этот срок может составлять от 4 до 12 лет. По истечению срока поверки прибор не гарантирует точность показаний и считается неисправным. В этом случае оплата за потреблённый газ может начисляться по нормам потребления и установленной мощности газоиспользующего оборудования.

**Уважаемые абоненты!**
**Соблюдайте правила пользования газом в быту!**

В целях бесперебойного газоснабжения и безопасной эксплуатации бытовых газовых приборов просим Вас обеспечивать доступ работникам газового хозяйства к оборудованию для проведения плановых ТО. О неисправностях газовых приборов, непригодности дымовых и вентиляционных каналов необходимо сообщать в обслуживающие Вас филиалы ОАО "Газпром газораспределение Чебоксары" и на их газовые участки по телефону 04, с мобильного телефона - **104** либо **112.**

*ОАО "Газпром газораспределение Чебоксары".*
*Лицензия Ростехнадзора от 11.06.2010 №ВП-00-011658 (ЖКС).*

**«Хыпар» хаçатăн çитес номерĕ çу уйăхĕн 17-мĕшĕнче тухать.**

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMVIII
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, "ХЫПАР" ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ
Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор служби Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăмат кун" – 78353, "Çамрăксен хаçачĕ" – 54804, "Чăваш хĕрарăмĕ" – 11515, "Сывлăх" – 11524, "Кил-çурт, хушма хуçалăх" – 54806.

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторĕ М.М.АРЛАНОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор – тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор Ю.С.МИХАЙЛОВ

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "ХЫПАР".
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
hypar2008@rambler.ru
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.
Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта: hypar1@mail.ru hypar@mail.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.
Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă"** рубрикăсемпе пичетленеççĕ.

Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 7497. Заказ 1729.